24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941
НОЯБРЬ
4
ЫТЛАРИКУН
260 (5975) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

СССР халăхĕсен ирĕклĕхĕпе пурнăçне нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен геройла хӳтĕлесе тăракан Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ сывă пулччăр!

(Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă тĕле ЦК ВКП(б) кăларнă лозунгсенчен)

Шкулсемшĕн куллен тăрăшмалла

Вăрçă вăхăтне кура пысăк йывăрлăхсем тухса тăнă пулин те, кăçал республикăри нумай шкулсем вĕренӳ ĕçне йĕркеллĕн пуçласа, ăнăçлăн туса пыраççĕ. Чăн-чăн совет патриочĕсем—пирĕн учительсемпе шкул ачисем хальхи тапхăрти пысăк ответлăха туйса ĕçлеççĕ. Республикăри партипе совет тата ытти обществăллă организацисем чылайĕшĕсем, фронта пулăшас енĕпе пысăк ĕçсем туса пынă вăхăтрах, шкулсем çинчен те манмаççĕ. Вĕсем, пирĕн шкулсенче çулăмлă совет патриочĕсен çĕнĕ отрячĕсем çитĕнсе пынине ăнланса тăрса, шкул нушисене тивĕçтерсе пырассишĕн мирлĕ вăхăтринчен те ытларах тăрăшса ĕçлеççĕ.

Шкулăн шалти пурнăçĕ—вĕренӳпе воспитани ĕçĕ малалла та ăнăçлă пулса пытăр тесен, пирĕн хальхи вăхăтра шкул енĕпе практикăллă чылай пысăк ыйтусем татса памалла. Чи малтан—республикăри шкулсене пурне те хĕле кĕме хатĕрлесе çитермелле. Пирĕн çамрăк патриотсене сивĕ çĕрте шăнса лармалла ан пултăр! Хĕл каçиччен хутма çителĕклĕ таран вутă хатĕрлесе памалла, шкул çурчĕсене тĕплĕн питĕрсе ăшăтмалла, пĕр сăмахпа каласан, шкулсене мĕн кирлине пурне те туса памалла.

Черепановецсем шкулсене обществăллă организацисем енчен пулăшу пама чĕнсе каланине ответлесе, пирĕн республикăри чылай обществăллă организацисем, предприятисемпе колхозсем шкулсене пысăк пулăшу пачĕç, халĕ те куллен пулăшса тăраççĕ.

Красноармейски районра шкулсем валли общественность вăйĕпе вутă 1.450 кубометр, Канаш районĕнче 1.885 кубометр турттарнă. Комсомольски районра общественность вăйĕпе 2.000 кубометр вутă турттарса, государство укçине 13 пин тенкĕ перекетлесе хăварнă. Çакă вăл хальхи вăхăтра питех те паха. Çак ĕçре çĕнĕ Мăрат, Кивĕ Сĕнтĕр, Кивĕ Высли, Çĕрпӳел колхозĕсем хăйсене уйрăмах палăртрĕç.

Ишлей районĕнчи колхозниксем воскресниксем туса шкулсем валли 843 кубометр вутă турттарса панă. Уйрăм районсенче çак ĕçе учительсем хăйсем те активлăн хутшăнаççĕ. Красноармейски вăтам шкулта учительсем хăйсен вăйĕсемпе 27 кубометр вутă турттарса килнĕ, Штанаш вăтам шкулĕнчи (Хĕрлĕ Чутай р.) учительсем 200 кубометр вутă хатĕрленĕ. Çавăн пекех Етĕрне районĕнчи шкулсенче те чылай учительсем вутă хатĕрлессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Анчах кунта районри организацисемпе ялсовечĕсем тата колхозсем çак ĕç çине начар çаврăнса пăхаççĕ. Вĕсем учительсене пулăшмаççĕ. Етĕрне районĕнче шкулсем валли пĕтĕмпе те 930 кубометр кăна турттарса панă-ха. Çавăн пекех ку енĕпе Улатăр, Куславкка, Пăрачкав, Çĕрпӳ, Сĕмĕрле районĕсем те япăх ĕçлеççĕ.

Çак районсенчи Советсен исполкомĕсемпе сутĕç пайĕсем, ялсовечĕсемпе шкул руководителĕсем уборка ĕçĕсем пуçланичченхи вăхăтпа усă курса юлма пĕлмен, кайран вутă хатĕрлессипе турттарас ĕçе тума шалти вăйсене мобилизацилеме пултарайман, халĕ те вĕсем ку енĕпе нимĕнех те тумаççĕ-ха. Вăхăт кĕтсе тăмасть. Уйрăм районсенче вутăсăр ларакан шкулсем те пур. Çак ситменлĕхе вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсемпе тӳрре кăларма тăрăшни сиенлĕ, вăхăтра тумалла ĕçе вăхăтрах тумалла, шкулсене çителĕклĕ таранах вутă хатĕрлесе памалла.

Шкул çурчĕсене хĕле кĕме хатĕрлес тĕлĕшпе нумай шкулсенчи учительсем хăйсен вăйĕсемпе чылай ĕçсем турĕç. Кавал вăтам шкулĕнчи (Вăрмар р.) учительсем шкул çурчĕсене хăйсен вăйĕпе питĕлетсе ăшăтса, государство укçине 2.000 тенкĕ перекетлесе хăварнă. Вăрмар районĕнче çапла майпа ĕçлесе пĕтĕмпе государство укçи-тенкине 26.000 тенке яхăн перекетленĕ. Карапай Шăмăршă (Шăмăршă р.) ялсовечĕн председателĕ Чернов юлташ шкулшăн хăй çине тăрса ĕçлет, шкула хĕле кĕме пĕтĕмпех хатĕрлесе çитернĕ. Кунта çителĕклĕ таранах вутă турттарса хунă, шкул çурчĕсене лайăх тӳрлетсе ăшăтнă. Чкаловски районра Кăзăл-Чишма, Чăваш Сăкăт колхозĕсем пулăшнипе, шкулсене хĕле кĕме хатĕрлесе çитернипе пĕрлех, ачасене вĕри апат çитерес ĕçе те организациленĕ.

Анчах шкулсем çине пур çĕрте те мар-ха çакăн пек тимлĕхпе пăхаççĕ. Чкаловски районрах Яншихово ялсовечĕ Тикешри пуçламĕш шкул çине пачах та çаврăнса пăхмасть. Çакă вăл шкул заведующийĕнчен Романов юлташран та килет. Шкул иккĕмĕш çул ĕнтĕ пĕр хутлă кантăксемпе ларать. Иккĕмĕш рамăсем тутарассишĕн никам та тăрăшмасть. Хĕле валли вутă хатĕрлемен. Шкул çурчĕ тавра карта та тытса çаврăнман, вăл тĕмĕнле тăлăха юлнă çурт пек ларать.

Паллах, кун пек шкулсем нумай мар, анчах вĕсем хăшпĕр обществăллă организацисем енчен, çавăн пекех учительсем енчен, шкулсем пирки тимлĕх сахалтараххине кăтартаççĕ. Хĕле кĕриччен пирĕн кашни шкул çуртне тĕплĕн питĕлетсе ăшăтмалла.

Тепĕр пысăк ыйту вăл—учебниксем пирки. Кăçалхи çул, нихăçанхи пек мар, учебниксем çителĕклĕн те вăхăтра тухса пыраççĕ. Чăвашсен государство издательстви питех те паха учебниксем кăларса пачĕ, халĕ те кăларать. Анчах кĕнекепе сутă тăвакан организацисем, Чăвашпотребсоюз системине кĕрекен организацисем, учебниксене кирлĕ çĕре кирлĕ вăхăтра çитерессишĕн тăрăшмаççĕ. Вĕсем ăçта, хăш районра, мĕнле учебниксем кирлине шута илсе пымаççĕ. Пĕр-пĕр учебнике нимĕн шута илмесĕрех пĕр-пĕр района ăсатаççĕ те, вара çав учебник лавккасенче йăваланса выртма та пултарать, анчах тепĕр районра çав учебнике шыраса та тупаймаççĕ. Ку йĕркесĕрлĕхе пĕтермелле, шкулсем валли пур тĕрлĕ учебниксене те вăхăтра çитермелле, ку çеç те мар, шкул ачисене ытти тĕрлĕ кĕнекесем те çителĕклĕ таранах памалла.

Шкулсенче пур япала та çителĕклĕ пулма тивĕçлĕ. Отечественнăй аслă вăрçă пынă тапхăрта начар ĕçлекен шкулсем пурри пĕрре те килĕшӳллĕ мар. Вăрçă вăхăчĕ—вăрçăри пек йĕркеллĕн те дисциплинăллăн ĕçлеме ыйтать. Шкулсемшĕн куллен тăрăшмалла, вĕсене куллен пулăшса пымалла.

Илнĕ обязательствăна ытлашшипех пурнăçланă

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнни нумай предприятисене производствăллă ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума пулăшрĕ. Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри комсомолкăсемпе çамрăксен Столярова юлташ ертсе пыракан бригади ĕç нормине 120 процент тултарса пыма обязательство илнĕ. Бригада октябрь уйăхĕнче кулленех икшер норма тултарса пычĕ. Нумаях пулмасть ученица пулса ĕçленĕ Демидова юлташ сменăри ĕç нормине 150 процент тултарса ĕçлет. Макаровăпа Игнатьева юлташсем ĕç нормине 150—175 процент таран тултараççĕ. Зимина юлташ сменăри нормăна икĕ хут ытларах тултарать.

Çиелти тумтирсем çĕлекен Логинова юлташăн бригади те кулленхи нормăна 173 процент тултарса пырать. Фабрика октябрь уйăхĕнчи малтанхи икĕ вунăкунлăх планне нумай ирттерсе тултарнă.

М. СМЕТАНИН.

Планлă заданисене тултарнă

Комсомольски районри «Красный маяк» колхоз обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет. Колхоз руководителĕсем тата фермăсен заведующийĕсем партипе правительство колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановленине тĕрĕс пурнăça кĕртсе пыраççĕ.

Историллĕ решени выльăх-чĕрлĕхсен продуктивноçне ӳстерме май пачĕ. Сĕт-çу ферми ĕнесенчен сĕт суса илмелли çулталăкри планлă заданине тăхăр уйăх хушшинче ытлашшипех тултарнă. Вăтам шутпа кашни ĕнерен 1000 литр сĕт суса илес вырăнне 1226 литр суса илнĕ.

Ытти выльăхсем тĕлĕшпе те планлă заданисене тултарнă. Кашни сысна [illegible] пуçне 12 çăвăр [illegible] 100 сурăх пуçне 130 путек илсе пăхса çитĕнтернĕ.

Фермăсенче ĕçлекен уйрăм работниксем чаплă примерсем кăтартаççĕ. Николаева юлташ хăйне çирĕплетсе панă ĕнесенчен планран ирттерсе 2.262 литр сĕт суса илнĕ, пăрусене ăнăçлăн пăхса çитĕнтернĕ. Çĕнĕ закон тăрăх Николаева юлташ 460 литр сĕт илет.

Чăх-чĕпсене пăхакан Кокарева юлташ планлă заданине тултарнăшăн 127 çăмарта, çамрăк выльăхсене пăхакан Андриянов—14 килограмм аш-какай илет.

Хальхи вăхăтра фермăсенче ĕçлекенсем выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленеççĕ.

Ветехник А. АГАПОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç çапăçнă.

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен пилĕк самолетне персе антарнă.

* * *

Хĕвеланăç тата Кăнтăр фрончĕсенче çапăçакан пирĕн авиачаçсем октябрĕн 31-мĕшĕнче нимĕçсенне 40 танк, 10 ытла танкетка, пехотăпа çар грузĕсем тиесе пыракан автомашинăсене 400 яхăн, 30 полевой оруди тата темиçе вуншар пулеметнăй точкăсене пĕтерсе тăкнă. Çак авиачаçсем октябрĕн 31-мĕшĕнче противникăн танксен соединенийĕн штабне çунтарса янă, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, тăшман пехотин икĕ колоннине, кавалерин икĕ взводне аркатса янă тата пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче çапăçакан Зайцев капитанăн артиллери чаçĕ пĕр кун хушшинче нимĕçсен пехотин пĕр полкне тата противник артиллерин пĕр дивизионне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енче пирĕн алла Германин 32-мĕш пехотнăй дивизи командирĕн генерал-лейтенант фон Штедтăн приказĕ лекнĕ. Çак приказа офицерсене валли анчах кăларнă. Генерал хăйĕн дивизийĕнче пысăк çухатусем пулнине кăтартса парать. Вăл çĕнĕрен пыракан салтаксем дисциплина енĕпе те, хăйсене тыткалас енĕпе те малтанхи салтаксенчен питĕ кайра тăнă пирки хăраса ӳкнĕ. Генерал апат-çимĕç таврашне кӳрсе килессе кĕтме суккине, нимĕç çарĕсем апат-çимĕç тупас тĕлĕшпе йывăрлăха кĕрсе ӳкнине паллă тăвать.

Нимĕçсен пысăк çухатусем пулнине тата Германи çарĕ пысăк йывăрлăхсем умне тухса тăнине 32-мĕш дивизин тыткăна лекнĕ салтакĕсем те çирĕплетсе параççĕ. 96-мĕш пехотнăй полкри 11-мĕш ротăри ефрейтор Эрих Венц çапла каласа панă: «Пирĕн ротăри 150 çынран 80 çынна яхăн пĕтрĕç. Пирĕн ротăра пулнă тăватă офицер-лейтенантсенчен иккĕшне вĕлернĕ, пĕрне амантнă. Пирĕн полкри ытти ротăсенчи салтаксем вĕсен ротисенче те çавăн пекех пысăк çухатусем пулни çинчен мана каласа пачĕç». Çав ротăри ефрейтор Гельмут Линденблатт та Венц каланине çирĕплетсе панă тата çапла каланă: «Вăрçă пуçланнăранпа октябрĕн 15-мĕшне çитиччен пирĕн кĕпе-йĕмсене пĕр хут анчах улăштарчĕç. Салтаксем питĕ пыйтланса кайрĕç. Пирĕн батальон командирĕ майор Рихтер çинче те пыйтăсем пур. Блиндажсенче салтаксем шăнса хытаççĕ. Питĕ нӳрĕ. Çывхарса килекен хĕл çинчен салтаксем хăраса шухăшлаççĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла йыткĕтĕвĕсем оккупациленĕ хуласенче Совет партизанĕсем хăюллăн çапăçаççĕ. Николаев хули хĕррисенче кашни ирех нимĕç тата румын салтакĕсемпе офицерĕсен виллисене тупаççĕ. Октябрь пуçламĕшĕнче фашистла офицерсем ĕçсе-çисе алхăсакан ресторан чӳречи витĕр каламалла çук вăйлă бомба пăрахнă. Бомба арканса кайнă та 8 офицера вĕлернĕ. Киевра нимĕçсен çар склачĕсем çунса кайнă. Октябрĕн 7-мĕшĕнче Крещатикре нимĕç войскисен колоннисем иртсе пынă вăхăтра универмаг çинчен бомба пăрахнă. Нимĕçсен 25 салтакĕпе офицерĕ вилнĕ.

Кривой Рогра рудком председателĕ Ш. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен хăюллă групли паттăррăн çапăçать. Нимĕçсен инженерĕсем Криворожски бассейнри рудниксенчен пĕрине ĕçе яма хатĕрлесе çитернĕ пулнă. Рудника усă вăхăтра темиçе çĕрте взрывсем пулнă та компрессорнăй установкăна, подъемнăй тата ытти механизмсене пĕтерсе тăкнă. Рудника усă çĕрте пулнă фашистсенчен чылайĕшĕ вилнĕ тата аманнă. Партизансем çав каçах нимĕçсен рудникĕсене сыхлама янă вăйлă отрячĕ çине пырса тапăннă. Партизансен разведчикĕсем часовойсене шăппăн вĕлерсе пĕтернĕ те электричество линийĕсене татнă тата нимĕç салтакĕсем пурăнакан хурал çуртĕ çине гранатăсем ывăтнă. Хуралçăсене пулăшма пынă нимĕç салтакĕсене партизансем автоматсенчен вăйлăн персе кĕтсе илнĕ.

Нимĕçсем хăшпĕр хуласенче çар хатĕрĕсем тăвакан производствăна организацилеме хăтланнине совет патриочĕсем арката-арката тăкаççĕ. Цехсенче взрывсемпе пушарсем пулаççĕ. Подшипниксемпе механизмсем ăшĕнчен хăйăр тухать. Нимĕçсем тытса илнĕ хуласенче кашни каçах çыхăнăва пăсаççĕ, электроэнерги парассине чарса лартаççĕ.

* * *

Пĕтĕм Словакире Германие хирĕçле массăллă движени сарăлса пырать. Чехипе Моравире пулса иртнĕ ĕçсем фашизма хирĕçле выступленисен çĕнĕ хумне сарса янă. Çак выступленисенче Словаки халăхĕн пур сийĕсем те хутшăнаççĕ. Вармей, Свети, Микулаш, Розенберг хулисенче фашистла бандитсен пусмăрĕ айĕнче хĕн куракан тăванла чех халăхĕпе пĕр шухăшлă пулнине палăртакан демонстрацисем пулса иртнĕ.

Пур хуласемпе ялсенче те, чехипе Моравири юнлă террора хирĕçлесе, Словаки халăхне фашизма хирĕçле ĕçсем тума чĕнекен листовкăсем сарăлаççĕ. Братиславри тата Словаки промышленноçĕн ытти центрĕсенче те Германие хирĕçле саботаж тăвасси массăллăн сарăлса кайнă. Пĕр эрне каярах Германи командованин заказĕпе вăрман çуракан Братислав çывăхĕнчи завода тивретсе янă.

Октябрĕн 14-мĕшĕнче Хĕвелтухăç Словакире пĕр каçрах Хĕвелтухăç фронтне каякан вицĕ çар поездне ӳпĕнтерсе янă.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан пирĕн пĕр часть ноябрĕн 1-мĕшĕнче нимĕçсен пехотин батальонне, 11 противотанковăй орудине пĕтерсе тăкнă тата 20 ытла пулемет, снарядсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче çапăçакан Максанов юлташăн авиачаçĕнчи летчиксем тăшманăн 16 танкне, боеприпассем тиенĕ 100 ытла машинине, противникăн пехотине 700 çын ытла, 9 зенитнăй орудине тата темиçе пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Майор Пушкинăн чаçĕнчи красноармеец Костюшко юлташ хăюллăхпа паттăрлăхăн тĕслĕхĕсене кăтартса панă. Тăшман пирĕн оборонăн участокĕсенчен пĕрин çине персе тăнă чухне тăшманăн снарячĕ боеприпассем хунă блиндажа пырса тивнĕ. Пушар пуçланнă, мĕнпур снарядсене вут тивсе илес хăрушлăх тухса тăнă. Костюшко çийĕнчех блиндаж ăшне кĕрсе кайнă та çунакан ещĕксене хăйăр сапса сӳнтерме пуçланă. Паттăр боец, хăй аманнă пулин те, тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне чаплăн пурнăçланă, пушара сӳнтернĕ.

* * *

Карело-Финн СС Республикин оккупациленĕ районĕсенче партизансем кашни кунах фашистсен подразделенийĕсем çине тата противникăн коммуникацийĕсемпе транспорчĕсем çине тапăнаççĕ. В. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ белофинсен обозĕ çине тапăннă. Белофинсен 15 салтакне пĕтерсе тăкса, партизансем полевой почтăна тата салтаксемпе офицерсене валли çырусем тиенĕ 2 лава тытса илнĕ. Телефон линийĕсене партизансем темиçе хутчен те тата-тата янă. П. командир пулса ертсе пыракан отряд çак кунсенче çапăçура противникăн салтакĕсене 100 çын ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Белофинсен роти фронт патнелле çуран пынă чухне вăрманта канма чарăннă пулнă. Партизансем белофинсене хупăрласа илнĕ, салтаксем полевой кухньăран апат илме черете тăрса тухсан вĕсем çине пеме пуçланă.

Çав отрядах октябрĕн юлашки çуруйăхĕнче противникăн горючи усракан икĕ базине тата боеприпассен складне взрыв туса сирпĕтсе янă, хĕллехи тумтирсен складне тивретсе çунтарнă.

Хĕллехи условисенче çапăçма партизансем тимлĕн хатĕрленсе пыраççĕ, ăшă тумтирсем хатĕрлеççĕ, лагере ăшă пулмалла тăваççĕ, йĕлтĕрсем хатĕрлеççĕ.

* * *

Горно-Бадахшански облаçри колхозсенче (Памир) октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Колхозсем государство валли тырпул, пахча-çимĕçсем, çĕрулми, аш-какай, çу, брынза, çăм, тир, утă тăратассин çулталăкри планĕсене срокченех пурнăçланă хыççăн, тырпула тата ялхуçалăхĕн ытти продукчĕсене государство валли сутма пуçланă. Шуганск районĕнче кăна колхозсем государствăна çĕршер тонна пахча-çимĕçсем тата выльăх апачĕсем сутнă. Сталин ячĕпе тăракан колхоз 120 тонна çĕрулми, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз 30 тонна çĕрулми сутнă. Çав япаласене сутса илнĕ укçана колхозсем нумайĕшĕсем çĕршывăн оборона фондне хываççĕ.

Нагорно-Бадахшанри колхоз кĕрхи ака туса пĕтернĕ. Кĕрхи тырăсен лаптăкне Рушаньре 150 гектар, Ванчере 170 гектар аслăлатнă. Çӳллĕ туллă Ишкашински районри Андропск тата Колдинск кишлакĕсен совечĕсенче кăçал чи пирвайхи хут кĕрхи тырăсем акса хăварнă. Облаçра кĕрхи тырăсем лайăх шăтнă, уйрăмах кĕрхи тулă лайăх шăтнă. Уйхир ĕçĕсене вĕçлесе, вуншар колхозсем ирригаци тума тата сулсене юсама тытăннă.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçусем туса пынă. Фронтăн Крымри участокĕнче уйрăмăнах хаяр çапăçусем пулнă.

Ноябрĕн 1-мĕшĕнче нимĕçсен 23 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 4 самолетне персе антарнă.

* * *

Пирĕн авиаци октябрĕн 31-мĕшĕнче нимĕçсен 80 танкне, противникăн боеприпассемпе пехотине турттарса пыракан 535 автомашинине, 30 яхăн орудийĕсене, 20 ытла зенитнăй точкăсене пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен пехотине икĕ полк ытла сапаласа ярса пĕтерсе тăкнă. Хĕвеланăç тата Кăнтăр фрончĕсенче пирĕн авиаци ноябрĕн 1-мĕшĕнче нимĕçсен 25 танкне, 10 бронемашинине, пехотипе вăрçă хатĕрĕсем турттарса пыракан 350 автомашинине, штабсен темиçе фургонне тата тăшманăн пехотине икĕ батальон ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан Н-ски чаçри красноармеец Лазарев геройла ĕç тунă. Ăна пирĕн территори çине кĕрсе кайнă нимĕç салтакĕсен ушкăнĕ хупăрласа илнĕ пулнă. Тăшмана хирĕç Лазарев вăйлăн çапăçнă. Анчах та нимĕçсем ăна хĕçпăшалсăрлатнă та хăйсен чаçĕ тăнă çĕрелле илсе пынă. Вĕсем пыракан çул çинчи пĕр участокра пирĕн саперсем минăсем хурса тухнă пулнă. Мĕнле хăрушлăх кĕтсе тăни çинчен Лазарев пĕлнĕ, анчах ун çинчен вăл тăшмансене пĕлтермен. Хăй вилсен те хăйпе пĕрле фашистсене вĕлересчĕ, тесе шухăшланă Лазарев. Вăйлă взрыв пулни илтĕннĕ. Тепĕр темиçе минутăран тăна кĕрсе аманнă Лазарев куçне уçса пăхнă та нимĕçсен темиçе салтакĕ нимĕн хуçкалмасăр выртнине курнă. Суран ыратнă пулин те, Лазарев шуса пырса хăйĕн чаçĕ тăракан вырăна çитнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансем фашистла захватчиксене хирĕç ăнăçлăн çапăçаççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, партизансем сентябрьпе октябрь уйăхĕсем хушшинче фашистсене хирĕç пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсен 287 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, тăшманăн 3 танкне, 10 самолетне, 6 орудине, 7 минометне, горючи тултарнă 18 цистернине, боеприпассем турттаракан 40 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинчех партизансем вицĕ çăмăл машина, 22 мотоцикл, 46 велосипед тытса илнĕ тата горючисемпе боеприпассен 7 складне, 17 кĕпере, хĕлле пурăнмалли 4 барака, нимĕçсен икĕ штабне, икĕ радио-телефон станцине çунтарса янă, 26 участокра телефонпа телеграф пралукĕсене татса тăкнă.

* * *

Франци халăхĕ фашистла оккупантсене хирĕç кĕрешесси кунран-кун вăйланса çивĕчленсе пырать. Нимĕçсем оккупациленĕ пур хуласенче те Францири патриотсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене вĕлерни нумайлансах пырать. Германи влаçĕсем хăйсен террорне вăйлатаççĕ. Виме тата Понтье хулисенче фашистсем 28 çынна арестленĕ, Парижра юлашки кунсенче 3000 çынна ытла тĕрмесене тытса хупнă. Нимĕçсем Франци гражданĕсене çĕршер çынна асаплантарса вĕлермелле тунă. Нимĕçсем халĕ çĕнĕ провокаци тăвас-

Малалли 4-мĕш страницăра

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

Шупашкар хулинчи ĕççынисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса вицĕ хут ăсатрĕç.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче те сарăлса пырать. Çак ĕçе уйрăмăнах Карл Маркс урамĕнче пурăнакан килхуçи хĕрарăмĕсем активлăн хутшăнчĕç. Халĕ вĕсем 2 мăшăр çăматă, 6 мулаххай, çăмран çыхнă 12 мăшăр алшиш-чăлхасем, 1 кĕрĕк пиншак, 1 башлык, 3 майкăпа джемпр, 2 шарф, пĕр мăшăр кĕпе-йĕм, простыняпа минтер пичĕ тата ытти япаласем пухса пачĕç. Уйрăммăн илсен, килхуçи-хĕрарăмĕ Андреева пĕр мăшăр çĕнĕ çăматă, свитер, çăмран çыхнă пĕрер мăшăр алшишпе чăлха, 2 шарф, Н. Ведянина—çăмран çыхнă пĕрер мăшăр чăлхапа алшиш, ăшă майка, Е. Борисюк—мулаххай, башлык, шлем, Е. Данилова—джемпрпа пĕр мăшăр чăлха, В. Павлова пĕр мăшăр кĕпе-йĕм, çĕнĕ простыняпа минтер пичĕ, Митькова—кĕрĕк пиншак, Соколова çăматă т. ыт. япаласем пачĕç.

Чапаевски поселокра пурăнакан килхуçи-хĕрарăмĕсем пурĕ 1 кĕрĕк пиншак, 1 мăшăр çăматă, çăмран çыхнă 28 мăшăр алшиш, 16 мулаххай тата ытти япаласем пухса пачĕç. Чебоксарская урамри килхуçи-хĕрарăмсем 12 куртка, 4 тир, 4 мăшăр алшишпе чăлха, пĕр мăшăр кĕпе-йĕм тата тĕрлĕ япаласем пухрĕç.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухас тĕлĕшпе ытти урамсенчи килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче те ĕçлеççĕ. Анчах чылай урамсен комитечĕсем çак паха ĕçе тивĕçлипе тытăнман-ха. Сăмахран, хулари чи пысăк урамсенчен пĕрине—Ленинградская урамах илĕпĕр. Ку урамри килхуçи-хĕрарăмĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем сахал панă.

Килхуçи-хĕрарăмĕсем хушшинче ĕçлеме хулари пуçламĕш парторганизацинче агитаторсем уйăрнă. Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем пани халĕ пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен çав агитаторсем килхуçи-хĕрарăмĕсене ăнлантарса парас ĕçе вăйлатма тивĕç. Çапах та хăшпĕр урамсенчи килхуçи-хĕрарăмĕсем хушшинче агитаторсем сахал ĕçлеççĕ-ха. Учреждениесемпе предприятисенчи пуçламĕш парторганизацисен çакна уйрăмăнах шута илсе, хăйсем уйăрнă агитаторсене çак паха ĕç çине ытларах çаврăнтарса пăхтармалла, вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмалла.

Хĕрлĕ Çара валли панă кашни ăшă япалах пирĕн боецсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма пулăшать. Çакна кашни килхуçи-хĕрарăмне лайăх ăнлантарса пани кирлĕ.

К. АФАНАСЬЕВ.

* * *

Шупашкар хулине кĕрекен Сосновка ялĕнчи туллимар вăтам шкулта вĕренекен пионерсемпе шкул ачисем Германи фашизмне хирĕç паттăррăн çапăçакан Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем, хăйсем нумайăн мар пулсан та, Хĕрлĕ Çар валли пурĕ 5 мулаххай, 6 мăшăр кĕпе-йĕм, 32 мăшăр чăлха, 18 катăк супăнь, 17 коробка шăл тасатмалли порошок, 3 флакон одеколон, 13 штука сăмса тутри, 9 штука шăл тасатмалли щетка, 2 алшăлли, 3 туплашка çип тата ытти япаласем пухса пачĕç.

Пухнă япаласемпе пĕрле вĕсем тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекен Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне çыру ячĕç. Хăйсен çырăвĕнче вĕсем çапла çыраççĕ:

«Тăван çĕршыва геройла хӳтĕлекен боецсем! Шупашкар хулине кĕрекен Сосновка ялĕнчи (Чăваш АССР) туллимар вăтам шкулта вĕренекен пионерсемпе шкул ачисен пысăках мар парнине илме ыйтатпăр. Германин урса кайнă фашизмне хирĕç çапăçас ĕçре сире пысăк çĕнтерӳсем тума сывлăх сунатпăр. Эпир ĕçре те, вĕренӳре те сирĕн паттăрла ĕçĕрсем çинчен ас илсе хавхаланатпăр, эпир халĕ пурте пĕр шухăшпа—урса кайнă тискер тăшмана хăвăртрах çĕнтерес шухăшпа пурăнатпăр. Сире, хаклă боецсем, пур предметсемпе те отлично вĕренме, хамăрăн вăй çитнĕ таран пур майпа та сире пулăшса тăма сăмах паратпăр.

Хĕрӳллĕ салам.

Сосновка шкулĕнчи пионерсемпе шкул ачисем».

* * *

КАНАШ. Анаткас Уçырма ялсоветĕнчи колхозсен членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли 118 тир, 16,1 килограмм çăм, 4 алшăлли, 19 мăшăр чăлха, 4 мăшăр алшиш тата урăх япаласем те пачĕç. Ялсовет исполкомĕн председателĕ П. Гавриловпа призывник Николай Григорьев юлташсем икшер тир пачĕç.

Ăшă тумтирсем пухас ĕç сарăлсах пырать.

А. ИВАНОВА.

Пирĕн тăван çĕршывăн чыслăхне, ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне паттăррăн хӳтĕлекен Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн боецĕсене, командирĕсене тата политработникĕсене отечественнăй аслă вăрçăн геройĕсене мухтав!

(Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 24 çул тултарнă тĕле ЦК ВКП(б) кăларнă лозунгсенчен)

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Тăшман çĕнĕ вăйсем пухать

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Волоколамск енче вой-скăсен положенинче ĕнер нимĕнле улшăнусем те пулса иртмен. Пирĕн чаç-сем хăйсен рубежĕсене çирĕплетсе пынă тата противникăн войкисем пĕр çĕре пухăннă çĕре артиллерирен персе тăнă. Нимĕçсем пĕчĕк ушкăнсемпе темиçе хутчен те пирĕн войскăсем тăракан вырăна савăлланса кĕрсе кайма хăтланса пăхнă, анчах нимĕçсен çавнашкал хăтланăвĕсене пурне те сирсе пăрахнă. Волоколамск енне противник хăйĕн резервĕсене илсе пынине палăртнă.

Можайск енче çапăçакан пирĕн чаçсем те хăйсен рубежĕсене çирĕплетсе пынă. Совет войскисем вырнаçнă тĕлелле противник артиллерирен тата минометсенчен персе тăрать.

Фашистсем Нара юханшывĕн хĕвелтухăç енчи çыранне каçма хăтланса пăхнă, анчах та тăшманăн атакисене пирĕн чаçсем сирсе пăрахнă.

Мало-Ярославец енче те Германи пехотин халь çеç килнĕ чаçĕсене пĕр çĕрелле пухнине палăртнă.

Çанталăк япăх тăнă пулин те, пирĕн авиаци разведкăллă вĕçевсем тунă, фашистсен войскисем çине бомбăсем пăрахнă. Хĕвеланăç фронтĕнчи авиаци октябрĕн 31-мĕшĕнче нимĕçсен 20 танкне, 250 автомобильне, 30 лавне, 15 орудине, 10 зенитнăй точкине, 10 мотоциклне çĕмĕрсе тăкнă тата тăшманăн пехотине пĕр батальон ытла пĕтернĕ. Пирĕн авиаци нимĕçсен пысăк штабне аркатса тăкнă.

Тăшман çак группăсемпе разведка туса пынă тата пехотăн, танксемпе артиллерин çĕнĕ вăйĕсене пухса тăнă.

Çак çĕнĕ войскăсене нимĕçсем Мускав патне пымалли вырăнсенче çапăçăва кĕртсе ярĕç, тесе шутлама пулать.

Хаяр çапăçусем

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧĔ, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Ленинград фронтĕнче нимĕçсен фашистла войскисем оборонăна куçнă. Фронтăн хăшпĕр участокĕсенче нимĕçсен командованийĕ, хăйĕн малти чаçĕсемпе усă курса, пирĕн войскăсем çине темиçе хутчен атакăлама тытăнса пăхнă. Анчах нимĕçсем нихăш çĕрте те нимĕнле çитĕнӳ те тăвайман.

Пирĕн войскăсем, çирĕп тата чăтăмлă пулса, тăшманăн атакисене пурне те сирсе пăрахнă. Пулса иртнĕ тытăçусенче пирĕн боецсем тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ.

Габин полковник чаçĕнчи боецсем çине фашистсем 4 хутчен атакăласа пăхнă. Анчах та пирĕннисем хăвăрт тата вăйлă пырса çапса, тăшмана каялла хăваласа янă, нимĕçсен 300 çынна яхăн вилнĕ тата аманнă. Пирĕннисем 4 миномет, 15 пулемет, боеприпассем тиенĕ 4 грузовой машина, икĕ походнăй кухня тата винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ, фашистсен 12 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Д. тата А. пункчĕсен районĕсенче пирĕн войскăсем хастарлăн çапăçса тăшмана хĕснĕçемĕн хĕссе пыраççĕ. Шыв урлă каçса çĕр чавса выртнă фашистсене хирĕç Трубачев командирăн подразделенийĕ çапăçăва кĕрсе кайнă. Нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнă. Анчах та вĕсене хăйсен позицийĕсенчен хĕссе кăларса хăваласа янă. Трубачев юлташăн подразделенийĕ ĕнер халăх пурăнакан Б. пунктĕ патне çитнĕ, çав вырăнăн хĕррисенче халĕ тăшмана хирĕç хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Противник пысăк çухату тăвать

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 31-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен фашистла войскисем юлашки кунсенче Крым фронтĕнче хĕссе пырассине вăйлатрĕç. Пирĕн чаçсем пур çĕрте те тăшмана хирĕç вăйлăн тăраççĕ, тăшман пысăк çухатусем тӳсет. Осипов командир пулса ертсе пыракан часть противникăн ударлă группин атакине сирсе янă, противникăн çав группи пирĕн оборона ăшне шала кĕрсе кайма хăтланнă тата хăйсен чаçĕсене куçса пыма май парасшăн пулнă. Тăшмана малалла куçса пыма чарса лартса, хăюллă та паттăр красноармеецсем контратакăна куçнă. Переправа патĕнче уйрăмăнах хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Шиксĕр тата тавçăруллă старший лейтенант Шишкин хăйĕн боецĕсемпе пĕрле çав переправăна йышăнса илнĕ. Осипов юлташăн чаçĕ тĕлĕнче противникăн самолечĕсем тăтăшах вĕçнĕ, паттăр красноармеецсем çине çав самолетсем пĕрмаях персе тăнă. Çапăçу 11 сехет хушши пынă. Осипов юлташăн чаçĕ тăшманран икĕ высота, виçĕ ял каялла туртса илнĕ тата нумай салтаксене, трофейăсене тытса илнĕ. Противникăнне икĕ батальона яхăн пĕтерсе тăкнă. Пирĕн оборонăна татса кĕрес тесе противник танксем, самолетсем пухнă тата çĕнĕ дивизи илсе пынă. Хăюллă та паттăр совет воинĕсем тăшмана ним шеллемесĕр пĕтерсе пырса, тăван çĕрĕн кашни пусăмне сыхласа хăварассишĕн вăйлăн çапăçаççĕ.

Совет бомбовозĕсем Берлин çинче

Çĕрле. Тĕттĕм. Хăватлă самолетсен çуначĕсем хушăран кăна йăлтăртатса илеççĕ. «Экипаж, на места»,—илтĕнсе каять команда. Пысăк карапсем çĕр çумĕнчен уйăрălса тĕлĕнмелле çăмăллăхпа çӳлелле çĕкленеççĕ. Совет бомбовозĕсем фашистсем йăва çавăрнă хура шăтăк çине вĕçсе каяççĕ.

Çул вăрăм. Гитлерла Германин столици çине вĕçсе кайма кĕçĕр çанталăк килĕшӳллĕ мар. Темĕн тĕрлĕ çанталăкра вĕçсе курнă летчиксем те кĕçĕрхи çанталăк çинчен пуçĕсемпе сулкаласа калаççĕ. Метеорологи сводки çанталăк япăх тăрасси çинчен систерет. Синоптиксен ним айăпсăр паллисем кунта—çӳлте, пĕлĕт çинче çанталăк япăххине, витĕр тухма çук тĕтре тăнине пĕлтереççĕ. Анчах та пирĕн çынсем çирĕп шухăшлă, ăста тата Берлин çине вĕçсе çитме панă задание мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртесшĕнех.

Машинăсем фронт линийĕ çийĕпе çӳлтен вĕçсе пыраççĕ. Самолетсен çуначĕсем айĕнче совет çĕрĕ, çав çĕре фашистсем варалană. Аялта çав вырăнра халĕ мĕн пулса иртет-ши? Гитлер ордисем вутпа тата хĕçпе килсе пирĕн хуласенчен мăшкăлланă, пирĕн ялсене таткаласа тăкнă. Вăхăтлăха нимĕçсем тытса илнĕ вырăнсенче халĕ мĕн чухлĕ трагеди пулса иртет-ши! Тен, пирĕн сывлăш карапĕсем малалла вĕçсе пынă çак минутăсенче фашистла ирсĕрсем асаплантарнипе нумай совет çыннисен пурнăçĕ татăлать пуль? Тискер кайăксем—гестаповецсем—çак вăхăтра мирлĕ çынсем пурăнакан çуртсене вăйпах кĕрсе кайса сĕм тĕттĕм çĕр варринче ним айăпсăр çынсене хăрушă майсемпе асап кăтартма сĕтĕрсе пыраççĕ пуль! Çаксем çинчен аса илни хĕрлĕ сăлтăрлă пысăк машинăсем ăшĕнче ларса пыракансен чĕрисене çавтери хытă ыраттарать. Фашистла разбойниксем пирĕн халăх валли мĕнле асаплăх илсе килни çинчен шухăшлама та йывăр. Ылханлă Берлин çине вĕçсе çитессишĕн летчиксем татах та паттăррăн тăрăшаççĕ, самолет йĕри-тавра тăракан тискер çанталăка хирĕç татах та хăюллăнрах кĕрешме тытăнаççĕ.

Карапсем гитлерла Германи çийĕпе вĕçсе пыраççĕ. Сĕм тĕттĕм чухне вĕсем Берлин районĕ патне çитеççĕ.

Тăшманăн зенитнăй батарейисем нимĕн те шарламаççĕ. Совет машинисем вĕçсе килсе тапăнасса вĕсем кĕтмен те. Хăйĕн наркăмăшлă аллисене пирĕн çĕр çинелле тăснă хула çийĕпе пирĕн самолетсем вĕçсе çаврăнаççĕ. Берлинра промышленность предприятийĕсем пуринчен ытларах хула тулашĕнче вырнаçнă. Металлурги завочĕсем тата машинăсем тăвакан заводсем хулан çурçĕр-хĕвеланăç енче. Çак вырăнсем çине ĕнтĕ халĕ эпир сывлăшран пырса çапатпăр.

Совет самолечĕсем çинчен вут тивретсе яракан бомбăсем пăрахнине пула пуçланнă пушар çулăмĕсем пирĕн бомбăсем пăрахмалли вырăна питĕ те лайăх çутатса кăтартрĕç.

Çакăн хыççăн кăна фашистсен зенитнăй артиллерийĕ нимĕн тума пĕлменнипе тĕлли-паллисĕр пеме тытăнчĕ. Трассирующи пулясем пĕлĕте тĕрлĕрен тĕслĕ йĕрсемпе чĕре-чĕре тухрĕç. Анчах та çавнашкал «иллюминаци» пирĕн самолетсене нимĕн чухлĕ те сиен тăваймарĕ. Пĕлĕт татăкĕсем витĕр пире лайăх палăрса тăракан объектсем çине фугаснăй бомбăсем тăкăнма пуçларĕç. Самолетсем пĕрин хыççăн тепри çак вырăна вĕçе-вĕçе пыраççĕ. Капитан Колечко, старший лейтенант Ремизов тата ыттисем те хăйсене панă задачăсене лайăх пурнăçлаççĕ. Бомбăна пăрахнă чухне кашни хутĕнчех машина чĕтренсе илет. Хăйсен боевой ĕçĕсем мĕнле иртнине экипажсем кăмăл тулли сăнаççĕ. Çĕр çинче—вăйлă взрывсем, пушарсем. «Ку сире вăл Мускавшăн!» хыттăн кăшкăрса калать лейтенант Трегубов.

Унăн сасси моторсен шавĕ ăшĕнче путать, анчах та çав сăмахсем мĕне пĕлтернине, паллах, Берлинра лайăхах ăнланчĕç.

Нимĕç чĕлхипе çырнă листовкăсем пăрахнă хыççăн самолетсем хĕвелтухăçнелле çул тытрĕç. Фашистсен зенитчикĕсем питĕ хытă пеме тытăнчĕç. Анчах та тăшман зенитнăй артиллерирен пени пирĕн совет бомбардировщикĕсем патне çитеймест, вĕсем питĕ çӳлтен вĕçсе пыраççĕ. Çакă ĕнтĕ вăл пирĕн авиаци промышленноçĕн мухтавлă ĕçне кăтартса парать. Пирĕн карапсем пурте хамăрăн базăсене таврăнчĕç. Тăшман пирĕн машинăсене пĕр тĕлтен те персе шăтарайман. Пирĕн карапсем задание питĕ чаплăн пурнăçларĕç. Совет бомбовозĕсем Берлин çине сывлăшран пырса çапрĕç, çакă ĕнтĕ вăл Мускавшăн каялла таврăни пулчĕ.

Ывăннă, анчах хăйсен ĕçĕшĕн кăмăллă летчиксем кĕçĕрхи каçăн результачĕсем çинчен пĕр-пĕрне каласа кăтартаççĕ. Капитан Колечко: «Берлин çине вĕçсе каймалли çула эпир лайăхах пĕлетпĕр. Çав çул тăрăх эпир пĕрех хутчен кăна мар вĕçсе кайса килĕпĕр-ха»—тет кулкаласа. (ТАСС).

Кăнтăр енчи çапăçусем

КАНТАР ФРОНЧĔ, ноябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Ĕнер кăнтăр фрончĕн хăшпĕр участокĕсенче противник наступлени пуçласа янă. К. ялĕн районĕнче нимĕçсен Клейст генералĕн группинчи 16-мĕш танковăй дивизи çапăçнă. Тăшман мала 100 ытла танк тата мотопехота нумай кĕртсе янă. Пĕр вырăнта нимĕçсене пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕрсе темиçе километр малалла куçма май килнĕ. Гончаров юлташăн чаçĕсем тăшмана хирĕç кунĕпех вăйлăн çапăçнă, каç пулнă çĕре фашистсен наступленине чарса лартнă. Çак çапăçура противникăн 15 танк, 20 оруди тата салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çын ытла пĕтнĕ.

Тепĕр участокра та вăйлă çапăçусем пынă. Нимĕçсен виçĕ пехотнăй дивизийĕ, танксем пулăшса пынипе, ирхине малалла куçма тытăннă. Нумай вăхăт хушши пынă çапăçусем хыççăн фашистсем К. ялне йышăнса илнĕ. Тăшмана сирсе пăрахма тата ăна çав ялтан хăваласа кăларма Провалов юлташăн чаçĕнчи боец-горняксене хушнă. Урамсенче темиçе сехет хушши вăйлă çапăçусем пынă. Çак çапăçусенче Копеяни капитан чаçĕ уйрăмăнах паттăррăн кăтартнă. Массăллăн хĕснине фашистсем чăтса тăрайман, хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă. Совет Союз Геройĕ Воеводин юлташ чаçĕнчи артиллеристсем яланхи пекех отлично çапăçнă. Вĕсем орудисенчен тĕл персе, тăшманăн пехотипе материальнăй чаçне нумай пĕтерсе тăкнă. Эпир тытса илнĕ трофейăсем хушшинче Польшăра туса кăларнă 110 винтовка пур. Çакă вăл нимĕçсем хăйсен кадровăй дивизийĕсем валли те Германире çителĕклĕ таран хĕçпăшал туса кăларма пултараймanни çинчен каласа парать.

Тăшман ĕнер тата Г. пункта тытса илме çĕнĕрен хăтланса пăхрĕ. Унччен пĕр кун малтан Итали пехотнăй полкне хула çине атакăна кĕртсе янă пулнă. Пирĕн Н-ски мотострелковăй батальонри артиллеристсемпе пехотинецсем вăйлăн персе тăшманăн колоннине сапаласа янă пулнă. Хăйсен планне пурнăçа кĕртесех тесе итальянецсем ĕнер каллех икĕ батальона çити пехотăпа наступлени пуçласа янă. Малтанхи пекех итальянецсен ĕнер те хыпалансах каялла чакмалла пулнă.

Ĕнер пирĕн летчиксем тăшмана пысăк сиен кӳнĕ. Пирĕн летчиксем тăшманăн мотомехколоннисем çине, промышленность объекчĕсемпе аэродромĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Годунов юлташăн пилочĕсем уйрăмăнах паттăррăн çапăçнă. Вĕсем штурмовой вĕçевсем туса тăшманăн çар грузĕсем тиенĕ 90 автомашинине, 7 танкне, 6 мотоциклне тата пехотине 400 çын ытла пĕтерсе тăкнă. Пирĕн йывăр бомбардировщиксем тăшманăн аэродромĕсем çине ăнăçлăн пыра-пыра тапăннă.

Кăнтăр фронтĕнче вăйлă çапăçусем малалла пыраççĕ. Фашистсем темĕн тĕрлĕ пысăк çухату тӳссе те пулин Совет Донбасне тытса илесшĕн, Донпа Кавказ патне пыма çул уçасшăн. Хĕрлĕ воинсем тăшмана хирĕç вăйлăн тăраççĕ.

Каялла пĕр утăм та чакмалла мар

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Мускав çине наступлени тăвасси питĕ хакла ларать. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, Волоколамск, Можайск тата Мало-Ярославец патĕнчи çапăçусенче фашистсен офицерĕсемпе салтакĕсем 20.000 çын вилнĕ, 50.000 çын аманнă, çавăн пекех тата 289 танк, 198 самолет, 142 оруди пĕтнĕ.

Мускав патне пымалли вырăнсенче пирĕн войскăсем тăшмана татах та хытăрах халран яраççĕ, тăшман тапăнасса кĕтмесĕрех ун çине активлă контратакăсем тăваççĕ, кĕтмен çĕртен пыра-пыра çапса тăшмана антратаççĕ, çапăçу валли тăтăшах разведка тăваççĕ. Противника вăл йышăннă участокĕсенчен хĕссе кăларас ĕçре пирĕн стрелковăй чаçсене хамăр артиллери пулăшса пырать. Германи командованийĕ сивĕсем пуçланиччен мĕнле пулсан та Мускава йышăнса илессишĕн тăрмашать, çавна тума Хĕвеланăç фронтне танксен, чĕрĕ вăйăн тата артиллерин çĕнĕ резервĕсене илсе пырса тултарса, вĕсене çапăçăва кĕрте-кĕрте ярать. Анчах та пирĕн чаçсем «каялла пĕр утăм та чакмалла мар» текен девиза асра тытса, тăван çĕршывăн кашни утăмнех юлашки сывлăш юлмиччен хӳтĕлесе тăма хатĕрленеççĕ.

Эпир халĕ Мускавшăн пыракан çапăçусен чи йывăр та ответлă тапхăрне кĕтĕмĕр. Çак кунсенче советăн столицине хӳтĕлесе тăракан Хĕрлĕ Çар воинĕсем умне чăннипех те историллĕ задача тухса тăчĕ. Умра темĕн тĕрлĕ йывăр кунсем пулсассăн та, пирĕн чаçсем хăйсен тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртме кирлĕ таран вăй тупаççех!

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Хĕвеланăç енĕ). **Ӳкерчĕк çинче:** Н-ски чаçре авиавооружени тĕлĕшĕпе ĕçлекен механик, старшина И. А. Таран тăшман аэродромĕсемпе противникăн чĕрĕ вăйне çĕмĕрме кайма хатĕрленекен самолет çине авиабомбăсем çакать.

Н. ФИНИКОВ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

РАЗВЕДКĂРА

Кĕрхи сивĕ каçа кĕçĕн сержант П. Ермаковпа красноармеец Тузиков юлташсем тĕттĕм вăрманта ирттернĕ хыççăн, ир енне партизансен отрячĕ вырнаçнă çĕре çитнĕ. Ирхи апат тунă хушăра партизансен отрячĕн командирĕ Н. юлташ Ермакова аяккалла чĕнсе илсе тăшман штабĕ ăçта вырнаçни çинчен пĕлтерет. Партизансем панă сведенисене тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн, разведчиксем каялла кайма тухнă.

Малтанхи лини иксĕ юлман, мина çурăлни, автоматпа пулеметран пени сывăхрах илтĕннĕ.

Кун каçала енне сулăннă, разведчиксем чарăнса тăрса йывăç туратти хуçăлнă сасса сăнанă.

Нумаях та вăхăт иртмен, йывăçсем хушшинчен нимĕç салтакĕ курăннă. Вăл каллĕ-маллĕ пăхкаласа нимĕç чĕлхипе темĕскер кăшкăрнă. Çавăнтах 5 салтакпа пĕр унтер-офицер курăннă.

— Пире курчĕç, граната хатĕрле, — пăшăлтатнă Ермаков юлташне. Чăнах та, фашистсем разведчиксене сăнанă. Икĕ разведчика чĕррĕн илме шухăшланă пулмалла.

— Урус, выходи, плен сдайся, — тесе кăшкăрнă нимĕç салтакĕ.

Пысăк хыр хыçне выртса Ермаков чаганран пеме пуçланă, кăшкăракан нимĕçĕ кĕлте пек кайса ӳкнĕ.

Ермаков, кăсйинчен карттине кăларса парса, Тузикова хамăрăннисем патне чупма хушнă.

Анчах Тузиков нумаях та каяйман, унăн сылтăм урине тăшман пульли амантнă. Урари суран ыратнипе вăл малалла утма пултарайман, тĕм хыçне пĕшкĕнсе ларса, фашистсем çине наганран пуля хыççăн пуля янă.

Ермаков тăшман çине икĕ граната пăрахнă. Тĕм çумĕнче выртакан тăватă салтак вырăнтан та хускалайман. Вăл хыгрампа шуса, пырса, унтер-офицер патне çывхарнă, вун-вуникĕ утăм юлсан, юлашки патронĕпе офицера лектернĕ. Фашист салтакĕ, пĕччен юлнине курсан, тарма тытăннă. Тузиков ăна та граната ывăтса вĕлернĕ.

Ермаков çĕр çине выртса итленĕ, анчах нимĕнле сасă та илтĕнмен. Вăл хăвăрт тăрса Тузиков выртакан тĕм патнелле васканă.

— Ну, мĕнле, утма пултаратăн-и? — тесе ыйтнă вăл юлташĕнчен.

Тузиков тăма хăтланнă, анчах тăма пултарайман.

Ир енне Ермаков юлташне хăй çинче йăтса пĕр çырма хĕрне илсе çитернĕ.

Тузиковăн суранне çыхса ăна тĕм хушшине, курăнмалла мар çĕре, выртарнă та, Ермаков шурса кайнă юлташĕ çине пăхса илсе хăмăшсем хушшине кĕрсе çухалнă.

Ирхи кăвак çутăпа, нимĕçсем пулеметран пенине пăхмасăр, боецсем Тузикова виçĕ пĕренерен тунă сулă çинче хамăр енне каçарнă.

Красноармеец **П. ЗАЙЦЕВ.**

Действующи арми.

412 çын ПВХО ĕçне вĕренсе пĕтернĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Осоавиахимăн Анат Тăрмăш ялсоветне кĕрекен «Авангард» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем çумĕнчи пуçламĕш организацийĕсем хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ йĕркепе туса пыма тăрăшаççĕ.

Организацисен председателĕсем В. Кириллов тата А. Сидоров юлташсем пуçарнипе çак кунсенче 412 çын ПВХО ĕçне вĕренсе пĕтерчĕç. Ку ĕçре уйрăмăнах ялти актив тăрăшса ĕçлерĕ.

И. ЛАПШИН.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Канаш районĕнчи партии активĕн пухăвĕ

КАНАШ. **(Телефон тăрăх, хамăр корр.).** Ĕнер, ноябрĕн 1-мĕшĕнче, районри партактивăн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВКП(б) Чăваш Обкомĕн VIII пленумĕ йышăннă решенисене сӳтсе-яврĕ. Çак ыйтупа ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Матвеев юлташ доклад туса пачĕ. Прениre 15 çын тухса каларĕ. Докладчик тата прениre тухса калакансем партиллĕ-политикăллă ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинче чарăнса тăчĕç. Вагонсем юсакан заводри, «Красный воин» артельри тата депори пуçламĕш парторганизацисем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ хушнă пек çĕнетсе йĕркеленĕ. Партиллĕ-политикăллă ĕçе хуçалăх задачисемпе таччăн çыхăнтарса пынă. Çавна май заводра, депора, артельре ĕç тухăçлăхĕ кунран кун ӳссе пырать. Заводри рабочисем хушшинче ĕç нормине куллен 200—300-шер процент тултарса пыракансен хисепĕ июль уйăхĕнче 9 процент кăна пулнă пулсан, халĕ вĕсен хисепĕ 38 процента çитнĕ. Ремонтно-механически тата тимĕрçĕ цехĕсенче двухсотниксен хисепĕ 80—87 процента çитнĕ.

Заводри, депори тата артельри ертсе пыракан работниксем массăллă-политикăллă ĕçе хăйсем активлăн хутшăнаççĕ. Депо начальникĕ Прокофьев, артель правлени председателĕ Корчагин юлташсем тата заводри производство командирĕсем докладсем туса, хаçатсем вуласа парса, рабочисене Совет Информаци Бюровĕ пĕлтернисемпе, халăхпа вăхăтра пулса иртекен пысăк событисемпе паллаштараççĕ.

Çав вăхăтрах МТС, МТМ, лесхоз çумĕнчи парторганизацисем ВКП(б) XVIII партконференци решенийĕсене пурнăçласси çинчен манса кайнă. Партиллĕ-политикăллă ĕçе начар туса пынă, парти ретне куллен ӳстерсе пыма кирли çинчен маннă.

Çыхăну контори çумĕнчи парторганизаци вăрçă пуçланнăранпа пĕр пуху та туса иртермен.

Прениre тухса калакансем нумайĕшсем—районра ялхуçалăх ĕçĕсем сӳрĕккĕн вĕçленсе пыни колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе начар туса пынинчен те килет, тесе палăртрĕç. Çакăнпа пĕрлех районри çĕрĕç тата хатĕрлев органĕсен ĕçĕсене хыттăн критиклерĕç. Çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Орлов, Наркомзаг уполномоченнăйĕ Васильев юлташсем хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетмен.

Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене çуррине яхăн кăна пурнăçланă. Чылай колхозсем кĕлте кĕртсе пĕтереймен-ха. Государство умĕнчи обязательствăсене тултарас, обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленсе çитес ĕçсем те начар пыраççĕ.

Актив пухăвĕ партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатас тата ялхуçалăх ĕçĕсене çитес çывăх вăхăтрах вĕçлес тĕлĕшпе конкретнăй мероприятисем палăртса хăварчĕ.

Парти кандидачĕсен канашлăвĕ

ÇĔМĔРЛЕ. **(Чăваш Коммуни» корр.).** Çак кунсенче ВКП(б) райкомĕ пĕчченшерĕн пурăнакан партии кандидачĕсене пухса канашлу туса ирттерчĕ. Канашлура пĕр ыйтăва — партии кандидачĕсен обязанноçĕсем çинчен сӳтсе-яврĕç. Çак ыйту тăрăх ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Савадеров юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик, çавăн пекех прениre тухса калакансем те, отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче предприятисемпе колхозсенчи чылай коммунистсем лайăх пример кăтартса ĕçленине палăртрĕç. Çав вăхăтрах уйрăм коммунист-одиночкăсем ĕççыннисем хушшинче çителĕксĕр ĕçлесе пынă.

Канашлура пулнисем ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе, пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пыма пулчĕç.

Канашлу пĕтнĕ хыççăн коммунистсем вырăс халăхĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн çапăçни çинчен лекци итлерĕç.

Çамрăксем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕç

ЕЛЧĔК. Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче районри комсомол организацисем политикăллă-массăллă ĕçе чылай çĕнетсе урăхлатрĕç. Чи малтанах ВЛКСМ райкомĕн бюровĕ 13 çынна пропагандист пулса ĕçлеме уйăрчĕ. Районĕпе 34 агитколлектив, унта 413 агитатор ĕçлеççĕ, вĕсенчен 168 çынĕ комсомолец. 147 комсомолец агитколлектив тулашĕнче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыраççĕ. Уйрăм вырăнсенче агитациллĕ-массăллă ĕç мĕнле тăни çинчен ВЛКСМ райкомĕн бюровĕнче 6 хутчен сӳтсе-явнă. ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда пайĕпе пĕрле кустсенче икшер хут агитаторсене, пĕр хут комсомолăн пуçламĕш организацисен секретарĕсене пухса канашлу ирттернĕ. Вăл канашлусенче политикăллă-массăллă ĕçе мĕнле майпа лайăхлатасси çинчен каласнă. ВЛКСМ райкомĕ вулав çурчĕсене агитациллĕ-массăллă ĕçĕн центрĕ тăвас тĕлĕшпе те чылай ĕçленĕ. Вĕсен заведующийĕсене пухса калаçнă.

Çавăн пек организациллĕ мероприятисене ирттернĕ хыççăн чылай комсомол организацисем агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăхлатрĕç. «КИМ» колхозри комсомолецсем кашни кунах колхозниксене хаçат-журналсем вуласа парас, Информбюро пĕлтерĕвĕсемпе паллаштарас ĕçе йĕркелерĕç. Политикăллă-массăллă ĕçе лайăхлатнă май, комсомол йышĕ те ӳсет. Нумай пулмасть колхозри малта пыракан çамрăксем: Лида Шавкина, Сима Мурзалимова, Агрипина Орлова тата ыттисем те Ленинла—Сталинла комсомол ретне кĕчĕç.

Политикăллă-массăллă ĕçе «Марс» колхозри комсомолецсем те начар мар йĕркеленĕ. Вĕсем халăх хушшинче докладсем, калаçусем туса ирттереççĕ. Комсомолец Сабирзяков, Гимранова агитаторсем ертсе пынипе комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне туса ирттернĕ. Воскреснике хутшăннă 57 çын 71 ĕçкунĕ тунă. Çав ĕçкунĕсемшĕн тивекен тырра оборона фондне параççĕ. Ку колхозра комсомолецсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтир пухас тĕлĕшпе те колхозниксем хушшинче ăнлантару ĕçне аван организациленĕ. Çавăнпа колхозра пурĕ 15 çăматă, 79 алшиш, 92 килограмм çăм, 26 çĕлĕк, 61 тир тата ытти те пухăннă.

Юлашки вăхăтра политикăллă-массăллă ĕçе «Вперед» колхозри комсомолецсем аванлатрĕç. Унти агитаторсем Апмарина, Германов, Светопольский тата ыттисем августпа сентябрь уйăхĕнче кăна 90 калаçу туса ирттернĕ, кĕнеке-хаçатсем вуласа панă.

Таяпари агитколлектив (руководителĕ Молоствов юлташ) хăйĕн ĕçне хуçалăхри ĕçсемпе çыхăнтарса пырать. Çавăнпа «Правда» колхоз государство умĕнчи обязательствăсене 100 процентчĕпех парса татнă, силос хывас плана тултарнă, выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленсе çитнĕ.

Политикăллă-массăллă ĕçе лайăхлатнипе пĕрле комсомол организацийĕсем хăйсем те тĕрекленчĕç, союзри ĕç лайăхланчĕ. Дзержинский ячĕпе тăракан, «Авангард» колхозсенчи комсомол организацисем пухусене вăхăтра, тĕплĕн хатĕрленсе туса ирттереççĕ. Унта производствăна, ĕç дисциплинине çирĕплетес, оборона ĕçне лайăхлатас ыйтусене сӳтсе-яваççĕ. Вĕсем член укçисене те вăхăтра тӳлесе пыраççĕ.

Уйрăм организацисем аванрах ĕçлеме пуçланă пулин те, политикăллă-массăллă ĕç районра кирлĕ вырăнта тăраймасть-ха. ВЛКСМ райкомĕ çумĕнчи культурăллă массăллă тата пропаганда енĕпе ĕçлекен яланлăх комиссисем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Культурăллă-массăллă комиссин председателĕ Ястребова юлташ хăйĕн членĕсене пĕрре те пухса калаçман. Çавăнпа вара уйрăм организацисем начар ĕçлеççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа 9 организацинче пĕр пуху та пулман. Союзра тăман \ çамрăксемпе ĕçлесси те начар тăрать. Юлашки 4 уйăх хушшинче мĕнпурĕ те 35 çынна çеç комсомол ретне илнĕ, вĕсенчен 5 хĕрача. 23 организацире 1941 çулта пĕр çынна та комсомол ретне илмен. Хăшпĕр организацисенче член укçине пухас ĕç те начар тăрать.

А. КРАСНОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Вулав çурчĕ вăрçă кунĕсенче

ВĂРНАР. Ирĕменкассинчи вулав çурчĕ хăй тавра çирĕп актив явăçтарнă. Унăн совечĕ учительсенчен, комсомолецсенчен, колхозниксемпе колхозницăсенчен — 9 çынран тăрать. Вулав çурчĕ халĕ вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлеме тытăнчĕ. Унта ятарласа справкăсем паракан сĕтел организациленĕ. Вăл тĕрлĕ ыйтусемпе пыракан колхозниксене тивĕçлĕ ответсем парса тăрать. Кунсăр пуçне вулав çурчĕ çумĕнче агитколлектив ĕçлет. Вăл 26 çынран тăрать. Агитколлектив членĕсем уборка вăхăтĕнче колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх тата пĕр чарăнмасăр туса пычĕç, халĕ те туса пыраççĕ. Вĕсем тăрăшнипе колхозри бригадăсенче кашни 5 кунта стена хаçачĕсем тухса тăраççĕ.

Кашни бригада çумне вулавçăсемпе агитаторсем çирĕплетнĕ. Е. Назарова, И. Зайцев, А. Алексеева, Е. Курбатова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем тăрăшса ĕçленине пула 81 колхозник ПВХО значокĕн нормисене пачĕç.

С. ПУДАКОВ.

Ҫӗнӗ закон тӑрӑх

Ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлемелле туни тӗштырӑ культурисен тухӑҫлӑхне, ҫавнашкалах выльӑх-чӗрлӗх продуктивлӑхне ӳстерме пысӑккӑн пулӑшрӗ. Республикӑри чылай районсем ӗнесенчен сӗт суса илес тата ҫамрӑк выльӑхсене пӑхса ҫитӗнтерес тӗлӗшпе паха ҫитӗнӳсем турӗҫ. Сӑмахран, Канаш районӗнчи колхозсем 1941 ҫулта вӑтам шутпа кашни ӗнерен 593 литр сӗт суса илнӗ пулсан, кӑҫалхи ҫултӑ уйӑх хушшинче 482 литр сӗт суса илнӗ. Киров ячӗпе тӑракан колхозри дояркӑсем А. Никифорова, Е. Козлова юлташсем хӑйсене ҫирӗплетсе панӑ ӗнесенчен кашнинчен план тӑрӑх 1200-шер литр сӗт суса илес вырӑнне 1745-шер литр суса илнӗ.

Шӑхасан районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхозра вӑтам шутпа кашни ӗнерен 1144 килограмм, «Прожектор» колхозра планлӑ задани тӑрӑх кашни ӗнерен 1400 литр сӗт суса илес вырӑнне 1680 литр суса илнӗ. ВКП(б) XV-мӗш съезчӗ ячӗпе тӑракан колхозри К. Алексеева доярка хӑйне ҫирӗплетсе панӑ ӗнесенчен планран ирттерсе 2015 литр сӗт суса илнӗ. Ҫавӑн пекех вӑл 10 ӗнерен 10 пӑру илсе, пурне те пӑхса ҫитӗнтернӗ. Ӗҫшӗн хушса тӳлемелли закон тӑрӑх Алексеева юлташ 302 литр сӗт илет.

Ҫакна палӑртас пулать: фермӑри работниксем хӑйсен ӗҫне юратса тӑваҫҫӗ, вӗсем ҫамрӑк выльӑхсене пурне те пӑхса ҫитӗнтерес тата выльӑхсен продуктивлӑхне пӗр вӗҫӗмсӗр ӳстерсе пырас тӗлӗшпе ытларах ответлӑ пулса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫӗрпӳ районӗнчи 31 фермӑра кашни 100 ӗне пуҫне 100 пӑру пӑхса ҫитӗнтернӗ. Ҫамрӑк выльӑхсене пӑхассине тӗрӗс организациленӗ фермӑсенче вӗсен чӗрӗ виҫи пысӑккӑн хушӑнса пырать. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра 6 уйӑха ҫитичченхи пӑрусем кашни талӑкра 750-шер грамм, уйрӑм пӑрусем килограмм ҫурӑ таран хушӑнса пыраҫҫӗ.

Канаш районӗнчи Максим Горький ячӗпе тӑракан колхозри сысна ферминче 22 амаран 325 ҫӑвӑр, е планран ирттерсе 73 ҫӑвӑр илнӗ. Буденный ячӗпе тӑракан колхозри свинарка Соколова юлташ кашни сыснаран 18-шар ҫӑвӑр илсе пӑхса ҫитӗнтернӗ. «Коммунар» колхозра Григорьева юлташ 90 сурӑхран 120 путек, Шемякина юлташ 24 сурӑхран 37 путек илнӗ.

Колхоз руководителӗсем обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ҫине тимлӗн ҫаврӑнса пӑхма тытӑнчӗҫ. Ҫавна пула Калинински районра ҫамрӑк выльӑхсем вилесси, иртнӗ ҫултипе танлаштарсан, 11—17 процента ҫити чакнӑ.

Нумай колхозсем тихасене те лайӑх пӑхса ҫитӗнтереҫҫӗ. Шӑхасан районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхозри Г. Кушаков конюх планран ирттерсе 11 тиха пӑхса ӳстернӗ. Ҫавӑншӑн Кушаков юлташ партипе правительство постановленийӗ тӑрӑх 555 тенкӗ укҫан илет. Киров ячӗпе тӑракан колхозри Войков конюх планран ирттерсе 7 тиха пӑхса ҫитӗнтернӗ. Вӑл уншӑн 350 тенкӗ укҫа илет.

Колхозсенче кайӑк-кӗшӗксем ӗрчетесси те вӑйланса пырать. Вӑрмар районӗнчи «Свобода» колхозра Т. Васильева юлташ хӑйне ҫирӗплетсе панӑ чӑхсенчен планлӑ задани тӑрӑх 5.390 ҫӑмарта илес вырӑнне 6.354 ҫӑмарта илнӗ. Планлӑ заданине ирттерсе тултарнӑшӑн Васильева юлташ 145 ҫӑмарта илет.

Республикӑра чылай колхозсем кроликсем ӗрчетме тытӑнчӗҫ. Ӗҫе лайӑх туса пынӑ ҫӗрте кроликсем те пысӑк тупӑш параҫҫӗ. Шӑхасан районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхозра Козлов юлташ 33 кроликран 491 ҫӑвӑр илсе, 6 уйӑха ҫитиччен пӑхса ҫитӗнтернӗ. Планлӑ заданине ирттерсе тултарнӑшӑн Козлов юлташ 6 уйӑха ҫитнӗ 24 ҫӑвӑр илет.

Ҫакӑн пек примерсене тӗмӗн чухлех илсе кӑтартма пулать. Выльӑхсен продуктивлӑхне ӳстерес ӗҫре партипе правительство колхозниксене ӗҫшӗн хушса тӳлесси ҫинчен йышӑннӑ постановлени чӑннипех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Колхозниксемпе колхозницӑсене ӗҫшӗн хушса тӳлес ӗҫе тӗрӗс ирттерес тесен, колхозсенче учет ӗҫне чӑннипех йӗркеллӗ тата тӗрӗс туса пымалла.

А. МИТРОФАНОВА.

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ РАЙОНӖНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ

Тухӑҫлӑ клевер

Районри колхозсем вӑрлӑхлӑх тума хӑварнӑ клевере уйран йӑлтах пуҫтарса кӗчӗҫ. «День урожая» колхоз вӑрлӑх тума вунсакӑр гектар хӑварнӑ пулнӑ. Клевере ӑнӑҫлӑн пуҫтарса кӗртсе, ҫапма тытӑннӑ. Кӑҫал клевер вӑрри тухӑҫлӑ пулчӗ. Вӑтам шутпа кашни гектартан икӗ центнера яхӑн тухать. Ҫапла, «День урожая» колхозӑн кӑҫал 30 центнер ытларах клевер вӑрри пулать. Ҫак шутран колхоз 10 центнерне хӑйне валли хӑварать, ыттине государствӑна сутать. Клевер вӑрринчен илнӗ тупӑш кӑҫал нихӑҫанхинчен пысӑк пулать.

«Коминтерн», «Заветы Ленина», «Великан» тата ытти колхозсем те вӑрлӑхлӑх тума хӑварнӑ клевере вӑхӑтра пуҫтарса кӗртрӗҫ. «Труженик» колхоз ҫапса пӗтернӗ, клевер вӑрлӑхне страхфонда хывнӑ.

Хӗрлӗ Чутай районӗнчи колхозсенче ҫитес ҫулта клевер вӑрлӑхӗ ытлашшипех пулать.

Государствӑна махорка параҫҫӗ

Кӑҫал районри вӑтӑр колхозра махорка лартса тунӑ. Колхозсенче махорка лартса тӑвас тӗлӗшпе уйрӑм бригадӑсемпе звеносем ӗҫлерӗҫ. Ҫитес ҫулта 40 колхозра махорка лартса тумалла, махорка лартакан лаптӑк та чылаях ӳсмелле.

Нумай колхозсем махорка хаклӑ йышши тата пысӑк тухӑҫ паракан культура пулса тӑнине туйса илчӗҫ. «Красное Сормово», «Пятилетка», «Коминтерн» колхозсем кӑҫал вӑтам шутпа кашни гектартан 25-шер центнер махорка туса илчӗҫ. Районри чылай колхозсем государствӑна пахалӑхлӑ махорка пама тытӑнчӗҫ. **Г. ИВАНОВ.**

Шупашкарти «Хлебокомбинат» пекарнинче. **Укерчӗк ҫинче:** Михайлов юлташ хулари магазинсене яма ҫӑкӑрсене майласа хурать.
Ф. ИВАНОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Пурӑнмалли ҫурт-йӗрсем хӗле кӗме хатӗр мар

Ҫак кунсенче Канаш хула Совечӗн XVI-мӗш сессийӗ пулса иртрӗ. Сесси пурӑнмалли ҫурт-йӗрсене хӗле кӗме хатӗрлес ыйтӑва сӳтсе-яврӗ. Ку ыйтупа тунӑ докладран тата тухса калакансен сӑмахӗсем тӑрӑх хулари пурӑнмалли ҫурт-йӗрсене хӗле кӗме хатӗрлесе ҫитерейменни палӑрчӗ.

Хулари коммунальнӑй хуҫалӑх пурӗ 101 ҫурт тытать. Вӗсен пурӑнмалли лаптӑкӗ 1656 метр. Паллах, ку лаптӑк куллен хушӑнса пыракан хула халӑхӗшӗн ҫителӗксӗр. Кӑҫал хула Совечӗ ҫӗнӗрен 7 ҫурт лартнӑ. Анчах хӑшпӗр ӗҫсене туса ҫитерейменн пирки вӗсенче пурӑнма май ҫук-ха.

Ҫавӑн пекех ҫуртсене юсас ӗҫ те сӳрӗк пырать. Тӗпренех юсама палӑртнӑ 9 ҫуртран пилӗкӗшне ҫеҫ юсанӑ, тӑваттӑшне юсас ӗҫ ҫаплах тӑсӑлса пырать. Пӗчӗкрех юсав ӗҫӗсене туса хула Совечӗ 45 пин тенкӗ уйӑрнӑ. Вӑтӑр тӑхӑр пин тенкӗ расходласа 7 ҫурта юсанӑ. Кивӗ материалсемпе усӑ курнипе 6 пин тенкӗ перекетлесе хӑварнӑ. Юсамаллисем татах 37 ҫурта яхӑн пур. Хула Совечӗ юлнӑ 6 пин тенкӗ укҫана ҫак ҫуртсене юсанӑ ҫӗре яма шутлать. Хула Совечӗ харпӑрхӑй вӑйӗпе юсас ӗҫе организацилемен. Коммунальнӑй управлени работникӗсем юсав ӗҫне государство укҫине тӑкакламасӑр тума кирли ҫинчен ӗҫсыннисем хушшинче агитаци сарман. Ҫавӑнпа ӗнтӗ нумайӗшӗсем вак-тӗвек юсав ӗҫӗсене те хула Совечӗ туса парасса шанса ларнӑ. Сесси пӗчӗк ремонтсене тума пурӑнакансене хӑйсене хушас тесе йышӑннӑ. Ҫавӑнпа суту-илӳ работникӗсен магазинсенче халӑха кирлӗ япаласене — мел, кантӑк, замазка т. ыттисем те халех тупса хатӗрлеме тӑрӑшмалла.

Хӗле хатӗрленес ыйтупа хула Совечӗ йышӑннӑ решенисем пурнӑҫа мӗнле кӗнине тӗрӗслесе тӑни кирлӗ. Вагонсем юсакан заводри рабочисен пурӑнмалли ҫурчӗсене хӗле хатӗрлес пирки сентябрь пуҫламӗшӗнчех сӳтсе-явнӑ, октябрӗн 1-мӗш тӗлне пӗтӗмпех хатӗрлесе ҫитерес, тесе решени йышӑннӑ. Халӗ ноябрӗн 1-мӗш те иртрӗ, вагонсем юсакан заводри рабочисен пурӑнмалли ҫурчӗсем хӗле кӗме хатӗр мар-ха. Ҫивиттисемпе маччасене юсас ӗҫе 35 процент ҫеҫ тунӑ. Чылай пӳлӗмсенче кӑмакасемпе плитасем усӑ курма юрӑхлӑ мар. Алӑксене ӑшӑ тытмалла тӑвас, чӳрече кантӑкӗсене лартас ӗҫсене ҫурри те туман. Кантӑк лартас енӗпе 3 ҫын кӑна ӗҫлет, вӗсем те ӗҫе васкаса тумаҫҫӗ. Октябрь тата Ильич ячӗпе тӑракан урамсенчи ҫуртсене юсама тытӑнман та.

Заводӑн хӑйӗн коммунальнӑй управлени пур. Анчах вӑл хӗллене хатӗрленес ӗҫ хӑй тӗллӗн пулса пырасса шанса ларать. Ӗҫе ертсе пыма мар, хваттер укҫине те вӑхӑтра пухмасть. Хӑшпӗр ҫынсем ҫӗнӗ ҫула кӗнӗренпе те хваттер укҫи тӳлемен.

Чугунҫул ҫинче ӗҫлекенсен пурӑнмалли ҫурчӗсене хӗллене хатӗрлес ӗҫре те ҫитменлӗхсем пур. Тӑватӑ ҫурта юсама 88 пин тенкӗ уйӑрса панӑ. Ҫак укҫана пӗтӗмпех расходланӑ пулин те, юсав ӗҫӗсене начар тунӑ. Хӑшпӗр ҫуртсенче алӑксене ӑшӑ тытмалла туман, мачча ҫине тӑпра хӑпартман. 42-мӗш номерлӗ ҫуртӑн кӑмакине йӗркеллӗ юсаман пирки анинчен тӗтӗм тухать. Хӑшпӗр хваттерсенче шыв трубисем шӑтӑк, кантӑксем ванчӑк.

Иккӗмӗш Канашра чугунҫул работникӗсен общежитийӗ пур. Унӑн кӑмакисем йӑтӑнса аннӑ, чӳречисем ҫӗмрӗк.

Туса ҫитерейменн ҫавӑн пек ӗҫсем ытти предприятисенче те пур. Мебельсем тӑвакан фабрикӑна юсав ӗҫӗсене тума 10 пин тенкӗ уйӑрса панӑ. Фабрика дирекцийӗ ҫав укҫаран чӗрӗкӗпе те усӑ курман.

Машинно-тракторнӑй мастерской, кайӑк-кӗшӗк комбиначӗ, Заготскот, Союзутиль хӗллене хатӗрленме тытӑнман та. Унти руководительсем кӑҫал хӗл пуласса кӗтмеҫҫӗ пулмалла.

Шкулсем ҫеҫ хӗллене лайӑх хатӗрленнӗ. 1-мӗш номерлӗ шкул черепановецсен меслечӗпе ӗҫлесе 4 пин тенкӗ перекетлесе хӑварнӑ. Пӗтӗм ӗҫе воскресниксемпе субботниксем ирттерсе, государство укҫине тӑкакламасӑр тунӑ. Педучилищӗри вӗренӳ хатӗрӗсене студентсемпе преподавательсем хӑйсемех юсанӑ.

Шкулсен хӗле хатӗрленес ӗҫре пӗр ҫитменлӗх вӑл—вутӑ кирлӗ чухлӗ хатӗрлейменни. Гортоп (начальникӗ Рыбников юлташ) вутӑ хатӗрлес плана 30 процента яхӑн ҫеҫ тултарнӑ. Хула Совечӗн аллинче вутӑ пӗр пуленке те ҫук. Ҫавна пула хӑшпӗр учрежденисемпе организацисем вутӑсӑр лараҫҫӗ.

Т. ИВАНОВ.

Выльӑх-чӗрлӗхе ӑшӑ витесенче тата тутӑ хӗл каҫарар

Тӗрӗслӳ мӗн кӑтартрӗ

ВӐРМАР. **(Телефонпа, хамӑр корр.).** Октябрь уйӑхӗн малтанхи ҫурринче районри комсомолецсем колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма мӗнле хатӗрленсе ҫитнине тӗрӗслесе тухнӑ. Тӗрӗслӳ тӗлӗшпе комсомол активӗнчен тата ҫӗрӗҫ работникӗсенчен 28 ҫын ӗҫленӗ. Унсӑр пуҫне ку ӗҫе выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекенсене те хутшӑнтарнӑ. Тӗрӗслӳ уйрӑмӑнах «Арабось», Калинин, К. Маркс ячӗпе тӑракан колхозсенче ӑнӑҫлӑ иртнӗ.

Калинин ячӗпе тӑракан колхозра сурӑхпа сысна витисен ҫивиттийӗ шӑтнӑ пулнӑ. Кун пирки комсомолецсем правлени ларӑвӗнче ыйту лартнӑ. Канмалли кун воскресник туса витесене витсе тухнӑ. Воскресникре уйрӑмӑнах М. Васильев, М. Семенов, Аввакумов тата Романкин комсомолецсем тӑрӑшса ӗҫленӗ.

К. Маркс ячӗпе тӑракан колхозра та комсомолецсем пысӑк ӗҫ тунӑ. Пӗрле пухӑнса лашапа сурӑх витисенчи шӑтӑк-ҫурӑксене питӗрсе тухнӑ. Ку ӗҫе П. Пунин, Петров, Викторова комсомолецсем пуҫарса, ертсе пынӑ.

«Победа» колхозра сысна витине юсанӑ. Чӑх-чӗпсем валли ҫӗнӗрен вите тунӑ.

Тӗрӗслӳ вӑхӑтӗнче чылай колхозсенче выльӑх апачӗсемпе мӗнле усӑ курни ҫине тимлӗн ҫаврӑнса пӑхнӑ. Сӑмахран, «Маяк» колхозра утӑпа тӗрӗс усӑ курманнине палӑртнӑ. Комсомолецсем фермӑсенче ӗҫлекенсене пухса калаҫнӑ хыҫҫӑн утӑна тӑккаласа сая яма пӑрахнӑ. Крахмал заводӗнчи ҫамрӑксем отходсене типӗтес ӗҫе йӗркеленӗ. Ку ӗҫре Иванов, П. Таратин, Артюков комсомолецсем активлӑн хутшӑнса ӗҫлеҫҫӗ.

Витесем хатӗр мар

СӖНТӖРВӐРРИ. Хӗл ҫывхарса килет. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхсене ӑшӑ витесенче тата тутӑ хӗл каҫарма хатӗрленесси—колхозсен умӗнче тӑракан тӗп задачӑсенчен пӗри. Ҫакна районри нумай колхозсем лайӑх ӑнланса илнӗ, выльӑх-чӗрлӗхсене хӗл каҫарма кӑтартуллӑн хатӗрленеҫҫӗ. Чучукассинчи Молотов ячӗпе тӑракан колхозӑн пурӗ 4 ферма. Фермӑсем валли колхозӑн пурте ҫителӗклӗ. Колхоз кӑҫал выльӑх-чӗрлӗх апачӗ ҫителӗклӗ пултӑр тесе, хӑшпӗр вырӑнта икӗ хутчен утӑ ҫулса илнӗ, 50 тонна силос хывнӑ, ҫителӗклӗ таранах ҫулҫӑллӑ апат хатӗрленӗ.

Пӗчӗк Маклашкинӑри «Хӗрлӗ Ҫар» колхоз та выльӑх-чӗрлӗхсене хӗл каҫарма аван хатӗрленет. Колхозӑн пӗлтӗр сыснасем валли вите пулман. Кӑҫал колхоз тӑмпа улӑмран сысна ферми валли пысӑк та ҫутӑ вите туса лартрӗ. Катеркассинчи «Заря» колхоз кӑҫал тӑмпа улӑмран сысна вити турӗ.

Хӗле аван хатӗрленекен колхозсемпе пӗрлех районра выльӑхсене хӗл каҫарма начар хатӗрленекен колхозсем те пур-ха. Юртакассинчи «Искра» колхозӑн иртнӗ ҫулта ӗнесем валли ӑшӑ вите пулман, вите тума халӗ те пуҫӑнман. Сӗнтӗрвӑрри хулинчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз иртнӗ ҫулта ӗне ферми валли вите тума тытӑннӑ, ӑна халӗ те туса пӗтермен.

Калас пулать, колхозсенче силос хывасси питӗ вӑрахӑн пулса пырать. Демешкино, Водолеево, Пущино колхозӗсенче силос хывма халӗ те пуҫӑнман.

Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи колхозсен выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ хатӗрлеме пысӑк майсем пур. Спиртзавод ҫулсеренех выльӑх-чӗрлӗх валли питех те аван апат—барда кӑларса тӑрать. Анчах та ҫак бардапа уйрӑм колхозсем туллин усӑ курмаҫҫӗ.

Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхсем валли ӑшӑ витесем, апат ҫителӗклӗ пулмалла. Ҫавӑн чухне ҫеҫ вӗсене ӑнӑҫлӑн хӗл каҫарма пултаратпӑр.

П. КРЫСИН.

Выльӑхсем валли—ӑшӑ витесем

КУСЛАВККА. Обществӑллӑ выльӑх-чӗрлӗхсене ӑнӑҫлӑн хӗл каҫарас, вӗсенчен продукци нумайрах илес ӗҫе хӗле лайӑх хатӗрленни чылай татса парать. Ҫакна ӑнланса илнӗ колхозсем выльӑхсем валли ҫулсеренех ӑшӑ та таса витесем, ҫителӗклӗ таран апат хатӗрлесе хӑвараҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе «Динамо» колхоз кашни ҫулах паха примерсем кӑтартать. Кӑҫал та витесене юсаса ӑшӑтнӑ. Выльӑх апачӗсене ытлӑн-ҫитлӗнех уйӑрса хӑварнӑ.

Варасӑрти «Правда», Минкӗшри «1-е Мая», Аялти Курканти «Красный курган», Ҫӳлти Куснарти «Красная Чувашия» колхозсем те хӗл кунӗсене кӗтсе илме лайӑх хатӗрленеҫҫӗ. Варасӑрти «Правда» колхозра лаша, ӗне, пӑру витисене юсаса ӑшӑтнӑ, 50 лаша вырнаҫмаллӑх ҫӗнӗ вите тунӑ. Выльӑхсем валли 100 тонна силос хывнӑ, 194 тонна хӗрлӗ кӑшманпа ҫӗрулми, 397 тонна ҫуртри улӑмӗпе ыраш улӑмӗ, 405 тонна утӑ уйӑрса хунӑ.

Сурӑхсене лайӑх пӑхнӑшӑн ҫӑм панӑ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Нӑрваш Шӑхаль ялсоветне кӗрекен «Ҫӗнтерӳ» колхозӑн сурӑх ферминче ӗҫлекен Кузьма Яковлев сурӑхсене лайӑх пӑхса, вӗсен продуктивлӑхне ӳстерессишӗн тӑрӑшать. Сурӑхсене лайӑх пӑхнине пула вӑл 33 сурӑх вырӑнне 36 сурӑха ҫитернӗ. Кӑҫал план тӑрӑх ҫав сурӑхсенчен 120 килограмм ҫӑм илмелле пулнӑ. Кузьма Яковлев сурӑхсене тимлӗн пӑхнипе 170 килограмм ҫӑм илнӗ. Ҫапла сурӑхсене лайӑх пӑхса вӗсен продуктивлӑхне ӳстернӗшӗн колхоз правленийӗ ӑна хӑйӗн ӗҫкунӗсем ҫумне 2 килограмм ҫӑм хушса панӑ.

И. МИТРОФАНОВ.

Всевобуч командирӗсемпе боецӗсене пулӑшма

Маршра вӑй-хала сыхласси

Кирек мӗнле марша пурнӑҫланӑ чухне те походра боецсен вӑй-халне сыхласси тӗп ыйту пулса тӑрать.

Пур вӑхӑтри вӑрҫӑсен историйӗнче те, ҫапӑҫу умӗнхи маршра ҫар хӑйӗн вӑй-халне пӗтернине тата ҫапӑҫу пултарулӑхне чакарнине пула, ҫапӑҫура парӑннин тӗслӗхӗсем тӗмӗн чухлех. Хальхи вӑхӑтри вӑрҫӑ условийӗсенче походра боецсен вӑй-халне сыхлас ыйту татах та ытларах ҫивӗччӗн тухса тӑрать.

«Марша организацилесе ӑна пурнӑҫа кӗртнӗ чухне тата канма чарӑннӑ вӑхӑтра личнӑй составӑн вӑй-хӑватне сыхламалли мерӑсене, обстановкӑна кура, пурне те обязательно йышӑнмалла», — тесе асӑрхаттарать Хӗрлӗ Ҫарӑн полевой уставӗ.

Маршра вӑй-хӑвата сыхласси чи малтанах боецсем походлӑ пурнӑҫа мӗнле хӑнӑхнинчен, йывӑрлӑхсемпе кӗрешме вӗреннинчен, походра санитарипе гигиена тӗлӗшӗнчен кашни ҫынӑн хӑйне-хӑй мӗнле тытмаллин тӗп правилисене пӗлнинчен тата похода мӗнле хатӗрленнинчен килет.

Кашни боецӑнах походра вӑй-хала мӗнле сыхламалли хӑнӑхусене вӗренсе пымалла. Походри пурнӑҫра «вак япаласем» ҫук. Ҫак «вак япаласене» шута илменни час-часах пысӑк инкек-синкек тӑвать те боеца стройран кӑларса пӑрахать.

Чи малтанах снаряжение типтерлӗ вырнаҫтарса хума вӗренмелле. Снаряжени ӳт-пӳ ҫумне тачӑ ҫыпҫӑнса тӑмалла, чупнӑ чухне тата боевой приемсене тунӑ чухне пӑрӑнса, хутланса каймалла мар пулмалла. Ҫакӑнпа пӗрлех татах снаряжени чӗнӗсемпе пиҫиххийӗсем кӑкӑра пусса тӑрса ирӗклӗн сывлама кансӗрлемелле мар. Ранецри тата япала хутаҫҫинчи япаласене йӗркеллӗ те типтерлӗ вырнаҫтарса хумалла. Ҫурӑм хыҫӗнчи грузӑн йывӑрӑшӗ пилӗк тӗлнерех пулмалла,—ку вара ҫурӑмри мышцӑсен ӗҫӗсене ҫӑмӑллатать. Шинеле тӗрке пек туса йӑтса ҫӳренӗ чухне ӑна лайӑх чӗркемелле те тренчикпе хытӑ ҫыхса лартмалла, ӑна пусса пыракан е мӑя сӑтӑракан тумалла мар. Хӑнӑхман боец походсенче час-часах хӑйӗн ӳт-тирне сӑтӑрнипе асапланать. Ҫакӑ ӗнтӗ питӗ пысӑк инкек пулса тӑрать. Империализмлӑ пӗррӗмӗш вӑрҫӑра, ҫак «пӗчӗкке» пек курӑнакан чир-чӗре пула, составӑн 50 процентӗ таран стройран тухса ӳкнин тӗслӗхӗсем те пулнӑ.

Боец стройран тухса ӳкмест пулсан та, сӑтӑрни тӳрренех боецӑн вӑй-халне усӑсӑрах ытлашши пӗтерттерет. Сӑтӑрни тавраш ан пултӑр тесен, кашни боецӑн урана тӑхӑнма пӗлмелле, урана тӑхӑнмаллисене йӗркеллӗ тытса усрамалла, тӑлапа усӑ курма пӗлмелле тата урана ҫуса-тасатсах тӑмалла. Атта е ботинкӑна ура тӑрӑх суйласа илмелле, — вӑл ытлашши тӑвӑр мар, икӗ мӑшӑр тӑла чӗркесен тӑхӑнмалла аслӑ пулмалла. Урана тӑхӑнмаллисене тӑтӑшах сӗрсе тӑмалла. Сӗрни, чи малтанах, урана тӑхӑнмаллине шыв витми тӑвать, унтан тата сӑрана ҫемҫетет те, ҫемҫе сӑран вара урана питех сӑтӑрмасть. Урана пӗр тикӗс хутланчӑксемсӗр тӑла чӗркесси питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Кашни май килнӗ тапхӑртах тӑлана ҫуса тасатса типӗтме тӑрӑшмалла. Таса мар тата йӗпе тӑла кирек мӗнле пулсан та урана сӑтӑратех. Урасене ирхине те, каҫхине те ҫумалла, чӗрнесене касмалла, чӗрне кӗтесӗсем тавӑрӑнса ӳт ӑшнелле ӳссе кӗнине ӑраснах лайӑх асӑрхамалла. Урисем ытлашши тарланипе асапланакан боецсен пулӑшу ыйтма санинструктор патне каймалла.

Ботинка тӑхӑнса ҫӳренӗ чухне ӑраснах обмоткӑсемпе тӗрӗс усӑ курма пӗлмелле. Вӗсене ура туни ҫине пӗр тикӗс чӗркесе тухмалла, вӗсем урана пусса тӑмалла мар, мӗншӗн тесен урана пусса тӑни юн ҫаврӑнӑҫне пӑсать те мышцӑсене ывӑнтарать.

Кашни боецӑнах марша хатӗрленме лайӑх пӗлнипе пӗрлех, тата походра хӑйне хӑй мӗнле тыткаламаллине те лайӑх пӗлмелле.

Снаряженипе утнӑ е чупнӑ чухне тӗрӗс утассипе сывлассин техникине вӗреннипе пӗрлех, маршра вӑй-хала сыхлас тӗлӗшпе вӑхӑтлӑ шыв ӗҫесси, канмалли вӑхӑтпа тӗрӗс усӑ курасси питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Похода лайӑх хатӗрленмен боецӑн часах шыв ӗҫес килекен пулать. Анчах та, пӗррӗмӗш хут шыв ӗҫес килнипех шыв ӗҫни усӑ памасть, сиен ҫеҫ кӳрет, мӗншӗн тесен вара малалла та тӑтӑшах шыв ӗҫес килекен пулать. Утнӑ чухне ӗҫнӗ шыва организм йышӑнмасть, вӑл шыв часах халран яракан тар пулса пӑсланса пӗтет. Вара татах малтанхинчен те ытларах шыв ӗҫес килекен пулать. Хӑйне хӑй тытма пӗлмен боец хӑй ӗҫнӗ шыва организм ӗҫне ҫӑмӑллатманнине, вӑл ӑна йывӑрлатнине тавҫӑрса та илеймест (мӗшӗн тесен шыв ӗҫсен чӗрен ытлашши, усӑсӑр шӗвеке уҫласа тӑмалла, ытлашши ӗҫсе тултарнӑ шыв сывлама кансӗрлет, пӑчӑртатса тухакан тар организмри ытлашши ӑшша тухма чарса тӑрать, ҫакӑн пирки вара организм ытлашши хӗрсе кайма, урӑхла каласан, ӑшӑ ҫапни пулма пултарать).

Кашни боецӑнах чи малтанхи маршранах хӑйне хӑй ытлашши шыв ӗҫессинчен чарма хӑнӑхмалла. Флягӑри шыв запасне перекетлӗ тыткаламалла, ӑна кирлӗ мар ҫӗртенех тӑккаламалла юрамасть. 8—12 километрлӑ марш тунӑ чухне флягӑна ҫӗнӗрен шыв тултармалла мар, ҫакӑн пек маршра пӗр фляга шыв ҫитмелле. 25—30 километрлӑ марш тунӑ чухне шыв ӗҫмелли режим, тӗслӗхрен, ҫакӑн пек пулмалла. Похода тухса каяс умӗн ӗҫес килми пуличченех чей ӗҫмелле те, флягӑна ҫуса тасатса унта шыв тултармалла. Малтанхи икӗ хут канма чарӑннӑ чухне ӗҫме кирлӗ мар. Лӑймака сийӗ типнӗ пирки шыв ӗҫес килнӗ пек пулнине флягӑри пӗр-икӗ сыпкӑм шывпа ҫӑвар ӑшне чӳхесе тӑкнипе ирттерсе ямалла. Виҫҫӗмӗш тата тӑваттӑмӗш хут канма чарӑнсан, кӑштах канӑ хыҫҫӑн, ҫур фляга шыв ӗҫсе яма юрать; анчах та, шыва пӗчӗкшер сыпкӑмӑн, шыва ҫӑварта ытларах тытса тӑрса ӗҫме тӑрӑшмалла.

Нумай вӑхӑтлӑха канма чарӑнсан, сасартӑк ӗҫме юрамасть, малтан ҫӑвар ӑшне чӳхесе тӑкмалла та унтан 8—10 сыпкӑм шыв ӗҫмелле. Кӑштах каннӑ хыҫҫӑн тин «тӑраниччченех» ӗҫме юрать. Каннӑ вырӑнтан тапранса каяс умӗн флягӑна татах шыв тултармалла. Кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн пӗррӗмӗш хут канма чарӑнсан, шыв ӗҫме кирлӗ мар (ҫӑвар ӑшне ҫеҫ чӳхесе тӑкмалла), шыва пулас икӗ канмалли вӑхӑт валли хӑвармалла.

Шӑрӑх вӑхӑтра ывӑнтаракан марш пулас умӗн ирхи апатра тата кӑнтӑрлахи апата канма чарӑннӑ вӑхӑтра 3—6 грамм ҫӑкӑр хытти ҫине хурса апат тӑварӗ (хлорлӑ натрий) хушса ҫиме сӗнме юрать. Ҫак тӑвара ҫинӗ хыҫҫӑнах лайӑх шыв ӗҫни организмра похода тухса каяс умӗн ӗҫнӗ шыва тытса тӑма пулӑшать, ҫапла вара шыв ӗҫес килнине чакарать.

Тӑвара хушса ҫини организмри хлорлӑ натрин запасне тултарать, мӗншӗн тесен тӑвар тар составне кӗнӗ пирки маршра хытӑ тарланипе тӑкакланса пырать. Хӑвӑрт утнӑ чухне шыв ҫителӗклӗ ҫеҫ ӗҫни ӑраснах паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать, мӗншӗн тесен хӑвӑрт утнӑ чухне мӗнпур организм питӗ вӑйлӑн ӗҫлет. Тата ҫакна та яланах асра тытмалла: походра шыва пӗлсе тӗрӗс ӗҫни маршра организм ӗҫне ҫӑмӑллатнисӗр пуҫне, вар-хырӑм чирӗсенчен сыхланма та пулӑшать; походра чарусӑр шыв ӗҫни вар-хырӑм чирӗсемпе чирлеттерни ахалех паллӑ.

Маршра вӑй-хала сыхлас ӗҫре канмалли вӑхӑтсемпе тӗрӗс усӑ курни те паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Канмалли вырӑна ҫитсен командир ирӗк парсанах снаряжение хывмалла та, ывӑннӑ мышцӑсене лайӑхрах кантармалли положени йышӑнса вырнаҫмалла. Урасене анса тулнӑ юна каялла юхса тухма пулӑшас тесе, урасене кӑшт ҫӳлерех туса лармалла е выртмалла. Каннӑ вӑхӑтра ура тупанӗ патӗнчен пуҫласа пӗҫ кӑкӗ патнелле ура тупипе пӗҫҫе сӑтӑрни ҫамай пысӑк пулӑшу парать. Нумай вӑхӑтлӑха канма чарӑннӑ чухне, апат ҫиес умӗн, урасене лайӑх ҫумалла, май килсен — шыва кӗмелле, кун пек тума май килмесен, кирек мӗнле пулсан та, урана салтмалла. Каннӑ чухне кирлӗ мар ҫӗртенех вырӑнтан вырӑна куҫкаласа, утса ҫӳреме кирлӗ мар, канма панӑ вӑхӑтпа туллин усӑ курма тӑрӑшмалла.

Команда составӗн, отделени командирӗсенчен пуҫласах, боецсене санитарипе гигиенӑн тӗрлӗ хӑнӑхӑвӗсене вӗрентес тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлемелле. Ҫакӑн пек воспитанин ӗҫне марша хатӗрленнӗ чухне тӑтӑшах туса пымалла, пӑшал пеме кайнӑ чухне те, тактикӑллӑ занятисенче те ун ҫинчен яланах асра тытмалла. Тӗрлӗ «вак япаласене» — тӑлана мӗнле чӗркемеллине, снаряжение мӗнле вырнаҫтармаллине кӑтартса парасси т. ыт. те, марша хатӗрленнӗ чухне те тата марша туса ирттернӗ чухне те боецсем санитарипе гигиена требованийӗсене пурнӑҫа мӗнле кӗртсе пынине командӑпа санитари составӗ тӑтӑшах тӗрӗслени паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Похода тухса каяс умӗнхи малтанхи кун тата похода тухса каяс умӗн те подразделени командирӗн пур боецсем те похода мӗн тери хатӗрленсе ҫитнине, боецсен обмундированийӗпе урана тӑхӑнмаллисем мӗнлине, снаряжени хатӗррине, флягӑсене шыв тултарнине т. ыт. те тӗрӗслемелле.

Подразделени командирӗн малтанах карттӑ тӑрӑх маршрута вӗренмелле, унта тӗл пулакан йывӑр тата ҫӑмӑлтарах участоксене палӑртмалла, хӑш вырӑнта «аллюрпа» — хӑвӑрт каймаллине, канма юрӑхлӑ вырӑнсене т. ыт. те палӑртса хумалла. Колонна пуҫне утӑм темпне лайӑх пӗлекен, ӑна стройра кӑтартса панӑ хӑвӑртлӑхпа пӗр тикӗс, боецсене халран яракан турткалашусӑр тытса пыма пултаракан боецсене тӑратмалла. Подразделени командирӗн боецсене марша тухса каяс умӗн тата походра канӑҫ парасси ҫинчен ӑраснах хытӑ шухӑшламалла. Марша тухса кайнӑ кун боецсене тухса каяс умӗн 1½ сехет маларах тӑратма юрамасть, ҫӗрлехи марша тухса каяс умӗн боецсене ҫывӑрма канӑҫ парас пулать. Похода тухса каяс умӗн тата канма нумайлӑха чарӑннӑ чухне боецсене, ҫула тухас умӗн 30—40 минута маларах, лайӑх апатлантармалла. Боецсене усӑсӑр тытса тӑрса вӗсен канӑҫне пӑсас мар тесе, апата вӑхӑтрах пӗҫерсе валеҫсе памалла.

Марша ертсе пырас ӗҫре канмалли вӑхӑта тӗрӗс суйласа илни питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Маршра вӑтам хӑвӑртлӑхпа (сехетре 5 километр) пынӑ чухне, устав кӑтартса панӑ тӑрӑх, кашни сехетрех кӑшт вӑхӑтлӑха канма чарӑнаҫҫӗ. Анчах та, хӑҫан канма чарӑнасси нумай чухне, кашни уйрӑм тӗслӗхрех, тӗрлӗ сӑлтавсенчен килет: пӗр-пӗтӗмӗшле обстановкӑран, вырӑнтан, боецсем мӗн тери ывӑннинчен тата ытти те. Командирӑн ҫак сӑлтавсене пурне те шута илмелле. Маршра пысӑкрах хӑвӑртлӑхпа (сехетне 7—8 километр таран) кайнӑ чухне канма чарӑнса тӑмаҫҫӗ. Анчах кашни 1—2 километр каймассеренех снаряжение тӳрлетме ҫул ҫинчех кӑшт чарӑнса тӑраҫҫӗ те, вара малалла боецсем ывӑнни палӑра пуҫласан, канас вырӑнне утассине хӑвӑртлӑхне (1—1½ минутлӑха) чакараҫҫӗ. Ҫӗрле тӑвакан маршсенче канас вӑхӑта чакараҫҫӗ. Походра боецсен вӑй-халне сыхлас тӗлӗшӗнчен илсен, обстановкӑна кура, вырӑнӑн рельефӗпе, тӑпра мӗнлипе тата ытти условисемпе те тӗрӗс усӑ курни — тӗрлӗрен йӗркеленсе, тӗрлӗ хӑвӑртлӑхпа, сӑмахран, вӑхӑтран вӑхӑта чупни питӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Канмалли вӑхӑтпа туллин усӑ курма май парас пулать, май килсенех снаряжение хывма тата ытти те ирӗк памалла. Командирӑн боецсем маршра хӑйсене мӗнле тытнине, вӗсем, пуринчен ытларах начартараххисем, мӗн тери ывӑннине ӑраснах хытӑ асӑрхамалла. Кирлӗ пулсан, вӑйсӑртарах боецсенчен снаряженин пӗр пайне илмелле те ӑна вӑйлӑраххисене памалла. Ҫакӑн пек асӑрхаса пыни командира утассине йӗркелесе пыма — утмашкӑн тивӗҫлӗ хӑвӑртлӑх илме, канмашкӑн чарма т. ыт. тума та пулӑшать.

**1-мӗш рангри ҫар врачӗ
Н. БУНКИН.**

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳн вĕçĕ

çĕ. Французсем нимĕçсен офицерĕсем çине тапăнакансене тытса парсассăн, заложниксене асаплантарса вĕлермелле тунине пăрахăçлама пулать, тесе пĕлтернĕ. Нимĕçсен офицерĕсене вĕлерекенсене французсем тытса паман. Укçа парассипе илĕртни те нимĕçсене пулăшман. Нумаях пулмасть нимĕçсен террорĕн çакнашкал факчĕ çинчен пĕлтернĕ. Забастовка тăвакан рабочисене фашистсен салтакĕсем фабрикăн йĕплĕ пралуксемпе карса тухнă килкартишне хăваласа кĕртнĕ те унта çав рабочисене тискер майсемпе хĕнесе тăкнă.

Ноябрĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Ноябрĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пур фронтсенче те противника хирĕç çапăçусем туса пынă.

* * *

Фронтăн Тула енчи участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем ноябрĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсенне 40 танк тата фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынран кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Проваловпа Харитонов юлташсен чаçĕсем, Кăнтăр фронтĕнче çапăçаканскерсем, пĕр кун хушшинчи çапăçусенче фашистсен 12 танкне, çар хатĕрĕсем тиенĕ 15 автомашинине, нимĕç пехотин икĕ батальонне пĕтерсе тăкнă; нимĕçсен 16 танкне тата орудисемпе миномечĕсене 10 ытла тытса илнĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче кĕрешекен пирĕн авиачасть тăшман моточаçĕсен пысăк колонни çине тапăннă. Нимĕçсен пехоти ларса пыракан 35 автомашинăна, 6 танка, горючи тултарнă 29 цистернăна тата нимĕç салтакĕсене 200 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн чаçсем вырнаçса тăнă çĕре Киев облаçĕнче çапăçакан партизансен отрячĕн участникĕ Ж. юлташ ятарласа пĕр поручениепе килнĕ. Ж. юлташ хресченсем тăван çĕршыва сутакансене хирĕç, фашистла бандитсен ставленникĕсене хирĕç кĕрешни çинчен каласа панă. Н. ялĕнче староста пулма унти кулакăн аслă ывăлне Прабейнова лартнă пулнă. Вăл хресченсен пурлăхĕсене тата выльăх-чĕрлĕхĕсене турта-турта илнĕ. Пĕррехинче хресченсем предателе вăрманта ярса тытнă. Кĕске вăхăт хушши суд тунă. Хресченсем изменника йывăç çине çакса вĕлернĕ.

Покровская ялĕнче Серебченкона персе вĕлернĕ, нимĕçсем ăна уголовниксенчен тăракан полицин вырăнти отрячĕн начальникĕ пулма уйăрса лартнă пулнă.

Ивановка ялĕнче кĕске вăхăт хушшинчех виçĕ предателе пĕрин хыççăн теприне вĕлернĕ. Çав предательсем ял старшини пулма килĕшсе фашистсен приказĕсене пурнăçа кĕртсе пынă пулнă. Старшина пулма килĕшекен çын пĕтĕм таврара пĕрре те юлман. Хресченсем предательсен çурчĕсене вут тивертсе яраççĕ, вĕсен выльăх-чĕрлĕхне тата пурлăхне пĕтерсе тăкаççĕ.

* * *

Ольберг хулинчи сахăр заводĕнче тата пиравăр фабрикинче, Германи çарĕн заказĕсене пурнăçа кĕртсе пыраканскерсенче, забастовкăсем сиксе тухнă. Забастовка тăвакансене предприятисенчен кăларса яма хăтланнисем ăнăçлă пулман. Юнлă тытăçура 9 нимĕçе вĕлернĕ тата амантнă, темиçе рабочи вилнĕ. Кунта паллă пулнă тăрăх, октябрь уйăхĕнче сахăр тăвакан тата Германи заказĕсене пурнăçлакан ытти предприятисенче нумайĕшĕнче забастовкăсем пулса иртнĕ. Нимĕçсем çĕршывран апат-çимĕç продукчĕсене тата горючисене пĕтĕмпех сăптăрса илсе тухма хăтланнисене Дани патриочĕсем хирĕç тăрса чăрмантараççĕ. Лобсонра тата Копенгагенра сахăр завочĕсем продукци кăларасси сентябрь уйăхĕпе танлаштарсан 15 процент чакнă, спирт заводĕнче 20 процент чакнă. Тамберг хулинчен инçе мар вырăнта Германие каякан поезд крушени тӳснĕ. Крушени сăлтавĕ—чугунçул линине ятарласа пăсни пулнă. Консерва тата чĕрĕ выльăхсем тиенĕ 27 вагона пĕтерсе тăкнă.

* * *

Совет çĕршывĕнчи заводсемпе фабрикăсен коллективĕсем вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхсемпе ĕçлесе фронт валли продукци туса хатĕрлеççĕ. Петровско-Забайкальски металлурги завочĕн пур цехĕсем те, сентябрь уйăхĕнче задание нумай ирттерсе тултарнăскерсем, октябрь уйăхĕнче татах та пысăк ӳсĕмсем тунă. Литейнăй цех çулталăк программине октябрĕн 26-мĕшĕнче тултарнă. Цехра двухсотниксен йышĕ пĕрре те çурă хут ӳснĕ. Мордва АССР-чи Н-ски завод вăрçăччĕнхи вăхăтра юлса пыракансен шутĕнче пулнă. Халĕ, çар хатĕрĕсем тума заказсем илнĕ хыççăн, завод коллективĕ программăна икĕ хут ирттерсе тултарать. Шелебугски сукно фабрикинче ĕçлекен рабочисем нумайĕшĕ нормăна ирттерсе тултараççĕ. Ткачсем икшер-виçшер станокпа ĕçлеççĕ, стахановла ĕçĕн тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ.

Шкул ачисен отвечĕ

Нумаях пулмасть Сĕнтĕрвăрри вăтам шкулĕнчи 6-мĕш класра вĕренекенсем действующи Хĕрлĕ Çартан янă çырăва илчĕç. Ачасен юратнă учителĕ пулнă Георгий Никитич Шляпин, 4 уйăх каярах фронта кайнăскер, хăй вĕрентнĕ ачасем патне салам ярса çапла çырать:

«Урса кайнă фашистсем пирĕн аслă Совет çĕршывне пĕтерсе хурасшăн, пирĕнтен нимĕç улпучĕсен чурисем тăвасшăн. Фашистла ирсĕрсем пирĕн ялсемпе хуласене çунтараççĕ. Вăхăтлăха туртса илнĕ вырăнсенче шкулсенчен выльăх витисем туса хураççĕ, пионерсемпе шкул ачисене нимĕн сăлтавсăрах пере-пере вĕлереççĕ.

Тискер вăрă-хурахсене хирĕç пирĕн Хĕрлĕ Çар воинĕсем паттăррăн тăрса çапăçаççĕ. Вилес умĕн урса кайнă тăшмана эпир çапса аркататпăрах, тăшман хăйĕн мухтавсăр вилĕмне пирĕн çĕр çинче тупĕ. Тăшмана хирĕç кĕрешме паттăрлăхпа хăюлăх, тавçăрулăхпа чеелĕх, уйрăмах, пĕлӳлĕх кирлĕ. Ачасем, çакна нихăçан та ан манăр, шкулта питĕ лайăх вĕренме, дисциплина тĕлĕшĕнчен хăвăра фронтри чăнчăн боецсем пек тыткалама тăрăшăр. Ачасем, эпĕ сире социализмлă ăмăртăва чĕнетĕп. Хам çине çакăн пек обязательствăсем илетĕп: тăшман кирек ăçтан килсе тухсассăн та, унпала кирек ăçта тĕл пулсассăн та, эпĕ ăна яланах пуçĕпех пĕтерсе пырăп; Хĕрлĕ Çар умĕнче панă присягăна вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртсе пырăп.

Салампа Г. Н. Шляпин».

Ачасем хăйсен юратнă учителĕн çырăвне класри пухура вуласа тухса сӳтсе-яврĕç. Çырури кашни сăмах ачасене чĕрĕ вăй хушса панă пек туйăнчĕ. 6-мĕш класра вĕренекенсем хăйсен учителĕ чĕнсе каланине пурте пĕр шухăшлăн пулса йышăнчĕç. Хăйсем çине çирĕп обязательствăсем илчĕç. Ачасем пурте, пур предметсемпе те лайăх вĕренсе пыма, хăйсене хăйсем фронтри боецсем пек йĕркеллĕн те дисциплинăллăн тыткалама, Хĕрлĕ Çар ретне мобилизациленĕ çынсен çемьисене пионерла пулăшса пыма сăмах пачĕç.

Ачасемпе Хĕрлĕ Çар боецĕсем хушшинчи çакăн пек пархатарлă çыхăну ачасен вĕренӳри хастарлăхне татах та ытларах хăпартать.

МИКИШ ПАВАЛĔ.

Çĕрулми кăларма пулăшнă

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри шкул ачисем ăнса пулнă тырпула, пахча-çимĕçе пухса кĕртес тĕлĕшпе кăçал колхозсене чылай пулăшрĕç. Тырă вырнă çĕрте кăна темиçе пин ача ĕçленĕ.

Юлашки вăхăтра шкул ачисем колхозсенче çĕрулми кăларас тĕлĕшпе начар мар ĕçлерĕç. Вăрман-Тăванти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем «Самолет» колхоза 337,14 центнер улма кăларса панă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах V «А» класс малта пынă, вăл класра вĕренекенсем 118,32 центнер кăларнă.

Мăн Улхашри вăтам шкулта вĕренекенсем «Красноармеец» колхоза пулăшнă. Вĕсем пĕтĕмпе 576 центнер çĕрулми кăларнă. Чăваш Улхашри туллимар вăтам шкул коллективĕ çывăхри «Искра» колхоза 5 гектар çинчи улмана кăларса панă.

Çĕнĕ кĕнекесем

Михаил Шолохов. Пулеметчиксен команди. ЧАССР Государство издательстви. Шупашкар, 1941 ç.

Писатель-орденоносец, СССР Верховный Совечĕн депутачĕ, Наукăсен Академийĕн действительнăй членĕ Михаил Александрович Шолохов кирек хăçан та массăсемпе пĕрле. Хальхи вăхăтра вăл пирĕн аслă çĕршывăн чи хĕрӳллĕ те паттăр ывăлĕ-хĕрĕсемпе: Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн боецĕсемпе, ополченецсемпе пĕрле фронтра нимĕç фашизмне хирĕç çапăçать.

М. А. Шолохова «Лăпкă Дон» ятлă роман-эпопейăшăн совет правительстви кăçал Сталинла премин парса наградăларĕ. «Лăпкă Дон» хăйĕн шухăшĕпе те, формипе те халăха питĕ те çывăх произведени пулса тăрать.

«Пулеметчиксен команди» — «Лăпкă Дон» романăн пĕр сыпăкĕ. Унта М. А. Шолохов граждан вăрçи вăхăтĕнче халăхăн хăюллă ывăлĕсем революци ĕçĕшĕн, ирĕклĕхшĕн, тăван çĕршывшăн мĕнле кĕрешнине кăтартса парать.

Илья Бунчук, Анна Погудка, Ребиндер, Крутогоров, Геворкянц пулеметчиксем хăйсенчен темиçе хут йышлăрах калединецсене хирĕç çапăçса, вĕсене каялла чакараççĕ.

Кĕнекере тĕрлĕ халăхсен кĕрешӳри туслăхне те аван кăтартса панă. Ĕçхалăхĕн тăшманĕсене хирĕç кунта вырăссем, украинецсем, армян, еврей т. ыт. те сумма-суммăн тăрса кĕрешеççĕ.

Красновпа Алагер юлташсем «Пулеметчиксен командине» чылаях тăрăшса куçарни сисĕнет.

РУЗВЕЛЬТ ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Черетлĕ пресс-конференцире Рузвельт Америкăн «Рубен Джемс» ятлă эсминецне путарнă пирки чарăнса тăрса, çав эсминеца мĕнле путарни халĕ ăна паллă мар-ха, тенĕ. Америкăн çар карапĕсем Германин подводнăй лодкисене путарнă-и, тесе панă ыйту çине Рузвельт ответ пама килĕшмен. Президент çапла кăтартса панă: иртнĕ вăрçăра Америкăн Пĕрлешӳллĕ Штачĕсем Германин подводнăй лодкисемпе рейдерĕсене путарни çинчен пĕлтермелле мар тенĕ принципа пăхăнса тăнă. Германин подводнăй лодкисене путарни çинчен информацине вăрттăн тытса тăни Германин тинĕс-çар флочĕшĕн йывăрлăх кăларса тăратать, тенĕ.

Америка эсминецне путарни

ВАШИНГТОН, октябрĕн 31-мĕш. (ТАСС). Тинĕс-çар министерстви çапла пĕлтернĕ: октябрĕн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Исландирен хĕвеланăçнерех Америкăн «Рубен Джемс» ятлă эсминецĕ çине торпеда янă. Карап путнă. «Рубен Джемс» суту-илӳ суднисене хӳтĕлесе пынă. Ĕç мĕнле пулса иртни тĕппипех паллă мар-ха. Ку таранччен çак эсминец команди 120 çынран тăнă. Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Рубен Джемса» путарнă хыпара илтсен Вашингтонри халăх питĕ хытă тарăхса кайнă. Айово штатĕнчен суйланă демократ-сенатор Джимет çапла каланă: американецсем хăйсен морякĕсене сыхлама пулаççĕ, тенĕ. Çурçĕр Декота штатĕнчен суйланă республиканец сенатор Гарлей çапла каланă: «Рубен Джемс» эсминеца путарни нейтралитет çинчен калакан закона улăштарма кирлине татах тепĕр хут кăтартса парать, тенĕ.

Нокс заявленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс министрĕ Нокс Германин подводнăй лодкисем «Стирни» эсминец çине мĕнле тапăнни çинчен пĕлтернĕ. Октябрĕн 16-мĕшĕнче çĕрле, — тенĕ Нокс, — «Стирни» эсминец, суту-илӳ суднисене сыхласа пыраканскер, «бедствие» текен сигнал йышăннă. Çав сигнала Германин подводнăй лодкисем атакăланă тепĕр конвойран панă пулнă. Тапăннă вырăна çитсен, «Стирни» эсминец суту-илӳ суднисене хӳтĕлес шутпа шыва темиçе бомба пăрахнă, çавăн хыççăн ун çине икĕ торпеда янă. Вĕсенчен пĕри эсминец умĕнче, тепри хыçĕнче çурăлса взрыв пулнă. Виççĕмĕш торпеда кочегарка патĕнчи штирборта ӳксе ватерлини айĕнче çурăлса кайнă. Котельнăй отделенине шыв илнĕ, кочегарка айĕнчи палубăна çĕмĕрнĕ. Командăран 11 çын вилнĕ. Малтан çав 11 çын нимĕнле хыпарсăр пĕтнĕ, тесе пĕлтернĕччĕ. Икĕ çын сăмăл аманнă. Юнайтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, судоходство бюровĕн начальникĕ адмирал Робинсон, эсминец çинче икĕ кочегарка пулни командира иккĕмĕш кочегаркăна ĕçлеттерме май панă, тесе паллă тунă. Çакă вара эсминеца никам пулăшмасăрах порта çитме пулăшнă.

Турци республикин президенчĕ тухса калани

ЛОНДОН, октябрĕн 31-мĕш. (ТАСС). Турция никама пăхăнманлăх праздник кунне уявланă май, паян Турци республикин президенчĕ Исмет Иненю халăха чĕнсе сăмах тухса каланă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче производствăна ӳстерме кирлине асăрхаттарнă, мĕншĕн тесен производствăна ӳстерни, вăл каланă тăрăх, вăрçă Турцие те пырса тивессине сирсе яма пултарать. Исмет Иненю çапла каланă: «Хамăр вăйлă халăхăн аслă праздникне эпир тĕнче кризисĕн хăрушă кунĕсенче уявласа ирттеретпĕр. Пирĕн çĕршыв—мирпе пĕрлĕхĕн телейлĕ вучахĕ пулса тăрать. Пирĕн çинче питĕ пысăк задачăна пурнăçа кĕртес ответлăх тăрать, çакă вăл — хамăрăн çĕршыва никама та тĕкĕнме памасăр упраса тăрасси. Халĕ пыракан пĕтĕм тĕнчери кĕрешӳ пирки сиксе тухакан йывăрлăхсем пире те пыра-пыра тивеççĕ. Хальхи пушар пирĕн çĕршыва та ярса илесрен çăлăнса юлмалли пĕртен пĕр май, — çав пушар ярса илсен те хамăрăн тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртмелли пĕртен пĕр меслет вăл — эпир яланах хатĕр тăни пулса тăрать. Çавăнпа пирĕн хамăрăн производствăна çĕклес пулать», тенĕ.

Сикорский пĕлтерни

ЛОНДОН, ноябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). «Крисчиен Сайенс Монитор» хаçатăн корреспонденчĕ Польшăн премьер-министрĕнчен генерал Сикорскирен илнĕ интервьюне парать. «Российăпа Германи хушшинчи вăрçă,—тенĕ Сикорский,—Хĕвелтухăç Европăри событисен аталанăвĕнче çаврăнуллă пункт пулса тăчĕ. Çав вăрçă пуçлансанах эпĕ чи малтанах Советлă Российăпа пĕр-пĕрне ăнланса илесси çинчен шутларăм. Çав политикăна эпĕ çирĕп тытса тăратăп тата совет правительствипе Польша хушшинче килĕшӳ тунишĕн телейлĕ. Совет правительстви çав килĕшӳ тăрăх пăхнă условисене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртсе пырать, тата вăл пире вăрçăн йывăр условийĕсенче халĕ вырăссен территорийĕнче пурăнакан нумай йышлă поляксенчен Польшăн никама пăхăнман çарне тума вăй çитнĕ таран пулăшать.

Июлĕн 30-мĕшĕнче тунă килĕшӳ тăрăх Российăпа Польша хушшинче пулса пыракан туслăх хĕвелтухăç Европа валли çĕнĕ перспективăсем кăларса тăратать, çав перспективăсен хăрушсăрлăхĕ тата ăнăçлăхĕ Российăпа Польша хушшинчи туслă отношенисенчен нумай килет. Польшăпа Россия хушшинчи туслăха йĕркелесе ярасси яланах Польша государствин тĕп тĕллевĕсенчен пĕри пулса тăнă. Польшăра çакна, хăшпĕрисене шута кĕртмесĕр, яланах асра тытаççĕ. Пĕтĕм Польшăн шухăш-кăмăлĕпе пĕр пек пулса тăнă çулйĕр çинчен мана нимĕн те сирсе яма пултараймĕ. Пирĕн союзник Англия та пирĕн государствăн пуласлăхĕпе çыхăнса тăракан çулйĕре тĕрĕс, тесе йышăнчĕ. Çавнашкалах тата эпĕ Советлă Россия тĕлĕшпе пулнă политикăна Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче тата Америкăра пурăнакан поляксем те ырланине пĕлсе тăратăп».

Польшăри лару-тăру çинчен сăмах тапратса, Сикорский çапла каланă: нимĕçсем поляксене 100.000 çынна яхăн вĕлернĕ. Ку шута концентрациллĕ лагерьсенче вилнисене кĕртмен. Пальмири ялне (Варшава çывăхĕнче),—тенĕ Сикорский,—унта гестаповецсем 5000 çынна вĕлернĕ май, вилĕм ялĕ, тесе ят панă. Вăйлă террор пулнă пулсан та, Германия Польшăра пуканелле правительство тума хăтланни арканса кайнă. «Пулас Польшăн,—тенĕ юлашкинчен Сикорский,—хăйĕн принципне тулли демократи тата парламент системин никĕсĕ çинче туса пымалла. Польша Англин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен идеалĕсене хирĕçле тăракан политикăн çулйĕрĕ çине тăма пултараймасть».

Петэнăн чăн-чăн сăпачĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Де Голль генерал хаçачĕ «Франс» ирĕклĕ Францин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн Морис де Жанăн заявленине пичетлесе кăларнă. Çак заявлени Францие сутса тăракан Петэнăн чăн-чăн сăпатне лайăх кăтартса панă.

1939 çулти ноябрь уйăхĕнче де Жан патне (вăл вăхăтра де Жан Францин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн Даладьен личнăй секретарĕ пулса ĕçленĕ) Испанирен килнĕ пĕр вăрттăн агент кĕрсе тухнă. Çав агент доклад çырса панă. Докладра Петэн маршала çывăх тăракан çынсем демократиллĕ Францие хирĕç вăрттăн усал ĕçсем туса пынине лайăх кăтартса панă пулнă. Çав сиенлĕ ĕçе пĕр Луссона Лата ятлă çын ертсе пынă, вăл çав вăхăтра Петэн штабĕ çумĕнчи вăрттăн разведка пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. Çав Луссона Лата, комунистсене хирĕçле хаçат кăларса тăнăскер, Германи фашисчĕсен Женевăри паллă организацийĕсемпе тачă çыхăну тытса тăнă. Официально вăл Дорио партин членĕнче тăнă, Франци халăхне сутакансен çак усал ушкăнĕпе Луссона Лата хăйне кирлĕ пек усă курнă. Çак Луссона Лата хăйĕн ĕçĕнче кагулярсем çине таянса тăнă, вĕсемпе вăл хăйĕн тусĕ Бельвинь де Линь генерал урлă çыхăну тытса тăнă. Франципе Германи комитечĕ те, пуринчен ытла çав комитет членĕ Бенуа Матен, Луссона Латана нумай пулăшнă. Çав доклада çырса паракан агент сăмахĕсем тăрăх, Петэна çывăх тăракан çынсем 1939 çулти ноябрьте Францин Германие парăнас пулать тесе активлă пропаганда сарнă, вĕсем ун чухнех тĕнĕл держависемпе сепаратнăй килĕшӳ тумалла тесе агитациленĕ.

Де Жан çак доклад çинчен ăна çĕнĕ хыпар вырăнне хурса Даладьене каласа кăтартнă. Анчах Даладье Петэнăн тем чухлĕ халăх пĕлекен сиенлĕ ĕçĕсене хăйĕн секретарĕ ку таранччен те пĕлтерменнинчен тĕлĕнсех кайнă. Францин ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви темиçе хутчен те Петэна Мадридра Франци посолĕ пулса ĕçлес постран хăтарма ыйтнă. Анчах та Даладье çак требование пурнăçа кĕртме килĕшмен, ун пирки вăл çапла каланă: Петэн Испанире пурăнни Францире пурăннинчен лайăхрах, тенĕ. Чылай каярахпа, 1940 çулти июнь уйăхĕнче, çула май Мадридра пулнă чух, де Жан çакăн çинчен те пĕлнĕ: 1939 çулти кĕркуннерен пуçласа Петэн çав Луссона Лата урлах Лавальпе яланах çыхăну тытса тăнă.

Германи пичечĕ йышăнни

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 31-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă ĕçĕсем нимĕçсене ытла та пысăк çухатусем кӳрсе Германири пурнăç йĕркисене пĕтĕмпех пăсса янă. Çакна пула сĕтĕрĕнчĕк Геббельса ятарласа уйрăм статья çырма лекнĕ. Çак статьяна Германири хаçатсенче пуринче те пичетлесе кăларнă. Геббельс çав статьяра малашне татах та йывăртарах çитменлĕхсем пуласси çинчен асăрхаттарать. Геббельс ирĕксĕрех йышăнса çапла çырать: «Сирĕн, хĕрарăмсен, кăшт та пулин пахча-çимĕçсем илес тесен те нумай сехет хушши магазинсем умĕнче тăма лекет. Рабочисем çитмен пирки, сире çĕркăмрăк тиеме тивет, ун хыççăн вара çĕр ирттерме убежищĕсемпе подвалсене кайма лекет, пĕр-икĕ сехет çывăрнă хыççăн каллех йывăр ĕçе тытăнмалла пулать. Çакă вăл нумай хуласенче куллен пулса пыракан лару-тăру, анчах та хăшпĕр вырăнсенче ку лару-тăру çакăнтан та начартарах», тет. Геббельс статьи, Германири лару-тăру хĕлле те çакăн пекех пуласине, е кунтан та йывăртарах пулса каясине систерекенскер, Берлинри халăха шиклентерсе ӳкернĕ.

ЦЮРИХ, ноябрĕн 2-мĕш. (ТАСС). Германи пичечĕ Германи салтакĕсем Хĕвелтухăç фронтĕнче тĕл пулакан пысăк йывăрлăхсене палăртать. Гиммлерăн пичетлĕ органĕ çак кунсенче: Хĕвеланăçĕнчи вăрçăра пирĕн салтаксем хăйсене ирĕклĕрех тыткаланă, халĕ Германи салтакĕсем чăн-чăн вăрçă мĕнле пулнине туйса илчĕç, тесе йышăннă. Германи хаçачĕсем: вăрçă пĕтесси курăнмасть-ха тата Германи халăхĕн çĕнĕ йывăрлăхсем тӳсме хатĕр тăмалла, тесе йышăнаççĕ. Нумаях пулмасть тепĕр хаçат статья пичетлесе кăларнă. Журналистсем хушшинче çирĕплетнĕ тăрăх, çав статьяна Геббельс хăй çырнă. Статьяра Германири мĕнпур халăха ытлашши оптимизма хирĕç тăма кирли тата вăрăм та йывăр вăрçа хатĕрленесси çинчен асăрхаттарнă. «Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă,—тесе çырать хаçат,—часах пĕтмест тата вăл Германи халăхĕн нервисемпе чăтăмлăхĕн аслă испытанийĕ пулса тăрĕ»

Черетлĕ призыв арканса кайнă

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Эльзаспа Лотаринги облаçĕсенче Германи çарне салтака илмелли черетлĕ призыв арканса кайни çинчен кунта сведенисем илнĕ. Çав облаçсенчи призывниксем çар влаçĕсенчен тĕрлĕрен майсемпе пытанса пурăнаççĕ. Хăйне хăй суранлатакансен шучĕ ӳссе кайнă. Германи влаçĕсем дезертирсене пит хаяррăн айăплаççĕ, вĕсен çемьисене пысăк асапсем тӳстереççĕ.

Италире продовольстви запасĕсем пĕтсе ларнă

СТАМБУЛ, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Стамбулра ютçĕршывсен журналисчĕсем хушшинче çапла пĕлтереççĕ: Италин Анкарари посолĕ çак кунсенче Турцин ютçĕршыв ĕçĕсен министерствине пырса Турцирен Итали валли кирек те мĕнле продовольстви продукчĕсем те сутма ыйтнă. Анчах та Турция Италие ним те сутма пултараймасть. Италия çапла васкаса, çине тăрсах ыйтни Италире продовольстви ыйтăвĕ ытла та йывăрланса çитнине кăтартать. Çапла калаççĕ: Италия хăйĕн çар нушисем валли хăйĕн мобилизаци запасĕнче пулнă продовольствипе кăшт кăна усă курма пултарнă, мĕншĕн тесен Гитлер ыйтнипе Муссолини çав запаса Германие яма килĕшнĕ. Гитлер хăйĕн требованийĕ пирки çапла ăнлантарса панă: Италия продовольствие хăй оккупациленĕ çĕршывсенче тупма пултарать, тенĕ. Çапла вара Германия кĕретĕнех çаратса кайнă пирки, халĕ Италия продовольстви запасĕсене хăйĕн çарĕ валли те ниçтан та тупаймасть.

Румынири вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат çапла пĕлтерет: Румынире Румыния вăрçа хутшăнса кайнине хирĕçле шухăш-кăмăлсем ӳссех пыраççĕ. Çакна паллă тăваççĕ: Румыния вăрçă пуçланнăранпа 250.000 çын çухатнă, ку шута вилнисемпе суранланнисем кăна кĕреççĕ. Вăрçă пирки Румыни хуçалăхĕ катастрофа умне çитсе тăнă. Бухарестран Стамбула çитнĕ çынсем çапла пĕлтереççĕ: чылай эрне хушши ĕнтĕ Румынире нумай продуктсем, вăл шутра тип çу, супăнь çук. Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: румынсем хĕле çитсе кĕрессинчен хăраççĕ. Çĕршывра продовольстви çитмест, тумтир таврашĕ çук. Ĕлĕкрех халăхран пĕтĕм çăма конфискациленĕ правительство халĕ работниксене çар валли тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕх пама хушать.

Бухарестран килнĕ çынсем Бухарестри кинотеатрсенчен пĕринче çакăн пек ĕç пулса иртни çинчен каласа кăтартаççĕ: кинохроника кăтартнă; çак кинохроникăра Гитлер сăнĕ тухсанах, нумайăн пĕр харăс шăхăрса янă. Кинотеатр залĕнче пулнă нимĕç офицерĕ çутă пама, залри халăхран айăплă çынсене кăтартса пама ыйтнă. Анчах офицер каланине никам та итлемен. Вара çавна тавăрма кинотеатра виçĕ эрнелĕхе хупнă.

«Нью-Йорк таймс» хаçат çакна асăрхаттарать: саботажсемпе йĕркесĕрлĕхсем час-часах пулса пынă пирки тата çартан таракан дезертирсем нумайланса кайнă пирки, хĕвелтухăç Румынире гестапо отделенийĕсене чылаях вăйлăлатнă. Румынире тăракан Германи çарĕнче кун пек пурнăçпа килĕшмен шухăш-кăмăлсем сарăлса кайни çинчен пĕлтерекен хыпарсем пур. Каланă тăрăх, иртнĕ эрнере Яссы хулинче Австри салтакĕсем восстани тунă, çавăн чухнехи тытăçура нимĕçсен офицерне вĕлернĕ.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: иртнĕ каç Англи авиацийĕ Çурçĕр-Хĕвеланăç Германи çине пырса тапăннă. Бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Çурçĕр-Хĕвеланăç Германири портсем çине, çав шутра Гамбургри тата Бременри портсем çине бомбăсем пăрахнă. Çавăн пекех Дюнкеркри тата Булоньри доксем çине пырса тапăннă. Англин 6 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

Англи авиацийĕ Ольсунд çине пырса тапăннă вăхăтра противникăн 7 карапне путарнă тата сиенленĕ пулнă. Çакна май авиаци министрĕ çыранри авиаци начальникĕ авиаци маршалĕ Филипп Джуенту патне çак чаплă çитĕнӳшĕн саламласа телеграмма янă.

Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 29-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксем Триполи çине питĕ пысăк бомбăсем пăрахнă. Çав бомбăсем тĕл лекнĕ. Вут чĕртсе яракан тата фугаснăй бомбăсемпе нумай çуртсене аркатса тăкнă. Çуртсен ванчăкĕсем пур еннелле те сирпĕннĕ. Октябрĕн 29-мĕшĕнче кăнтăрла Калабрири объектсем çине вĕçсе пынă, вăтам бомбардировщиксен пилочĕсем тинĕс хĕрринче нумай çынсем вĕсене саламласа алăсемпе сулни çинчен каласа панă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Триполи, Бенгази тата Барди (Ливире), Гераклион, Крит утравĕ çинчи Суду заливĕ çине пырса тапăннă. Триполи çине пырса тапăннă вăхăтра бомбăсем чугунçул çинчи çуртсем çине, паровоз деповĕ тата чугунçул линийĕ çине тĕл лекнине палăртнă. Питĕ пысăк пушарсем тухнă. Бенгазире суднăсемпе порт çине тата портри сооруженисем çине бомбăсем пăрахнă. Гераклионпа Суду заливĕ çине вĕçсе пынă вăхăтра çанталăк япăх пулнă пулин те, бомбардировщиксем кирлĕ объектсене шыраса тупса вĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Тĕтреллĕ çанталăк пулнă пирки бомбăсем пăрахнин результатне тĕрĕсех палăртма май килмен, çапах та летчиксем суту-илӳ парохочĕ çине бомбăсем тĕл лекнине палăртнă. Октябрĕн 29-мĕшĕнче Англи истребителĕсем чикĕ районĕнче «Мессершмиттсен» соединенине тĕл пулнă. Сывлăшри çапăçура противникăн пĕр самолетне персе антарнă. Çав кунах Кăнтăр-Африкăри сывлăш-çар вăйĕсен самолечĕсем противник тылĕнчи тĕрлĕрен объектсем çине пырса бомбăсем пăрахнă. Çак мĕнпур операцисенчен Англин 6 самолечĕ каялла таврăнман.

Германи фашисчĕсем Шанхайра Совет работникĕсене тапăнма хатĕрленеççĕ

ШАНХАЙ. (ТАСС). Октябрĕн 26-мĕшĕнче Шанхайра нимĕçсен радиостанцийĕ ТАСС-а тата унăн Шанхайри отделенине ертсе пыракансене хирĕç, уйрăмăнах Рогов юлташа хирĕç провокациллĕ заявлени тунă. Çакăн хыççăн Германи фашисчĕсен агенчĕсем, пуринчен ытла ванцзинвеевецсен речĕсенче тăракансем, нумай совет работникĕсем тата ТАСС корреспонденчĕсем хыççăн уççăнах йĕрлесе çӳреме пуçланă. Вырăнти журналистсем хушшинче çакă паллă пулса тăнă: Германи фашисчĕсемпе ванцзинвеевецсем тата хăшпĕр японецсем Шанхайра совет работникĕсемпе ТАСС корреспонденчĕсене тапăнса террорла актсем тума хатĕрленеççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7124

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 557, Ф. 6. 58 84 п. л.